# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

38 (9073) № ✻ Эрнекун, 2023 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 29-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Октябрĕн 1-мĕшĕ – Ватă çынсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНСЕМ, АСЛĂ ĂРУ ÇЫННИСЕМ!**

**Сире пурне те Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламлатпăр.**

Эсир мĕн ĕмĕр тăршшĕпех тăван район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хунă. Паян та эсир тăван тăрăхра иртекен пур мероприятире те, обществăлла ĕçре те хастар. Эсир пирĕншĕн пуриншĕн те ырă тĕслĕх пулса тăратăр.

Сирĕн пуян опыт, эсир паракан сĕнӳсем пире кулленхи ĕçре пулăшса пыраççĕ. Тавах сире пархатарлă ĕçĕршĕн, çитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕçе хастар хутшăннăшăн.

Эпир вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕççенĕсене, «вăрçă ачисене» пире мирлĕ пурнăç парнеленĕшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Тăван Муркаш Ен малалла та аталану çулĕпе çирĕппĕн уттăр, вăйлă та тĕреклĕ пултăр тесе хамăртан килнине пĕтĕмпех тума шантаратпăр.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатпăр. Сывăх çыннăрсем сире савăнтарса кăна тăччăр.

**Муркаш муниципалитет округ пуçлăхĕ А. МАТРОСОВ.**
**Депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн председателĕ А. ИВАНОВ.**

Йыхрав

## Тыр-пул уявĕ – октябрĕн 13-мĕшĕнче

Малашлăхшăн тăрăшакан ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çурхи уй-хир ĕçĕнчен пуçласа хура кĕрччененех умри тĕллевĕсене кунпа мар, сехетпе пурнăçласа пыраççĕ. Ун хыççĕнче экономикăна тĕреклетесси, ял çыннин пурнăçне лайăхлатасси тăрать.

Кăçалхи Тыр-пул уявĕ муниципалитет округĕнче октябрĕн 13-мĕшĕнче пулать. Çак кун савăнăçлă лару-тăрура ĕç çи паттăрĕсене чыслĕç.

Тыр-пул уявне çӳллĕ шайра хатĕрленсе ирттерессипе сентябрĕн 27-мĕшĕнче округ администрацийĕнче йĕркелӳ комиссийĕн ларăвĕ пулчĕ. Ăна комисси председателĕ – округ пуçлăхĕ Алексей Матросов ертсе пычĕ.

Уяв мероприятийĕсем 9 сехетре пуçланаççĕ. Çак кун Муркашри тĕп лапамра «Кĕркунне парнисем» выставка-ярмăркка ĕçлĕ. Уява пыракансене Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен суту-илӳ тата обществăллă апатлану предприятийĕсем, ял хуçалăх предприятийĕсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе уйрăм çынсен килти хушма хуçалăхĕсем хăйсен продукцине сĕнĕç.

Округ администрацийĕн методкабинетĕнче шкул ачисен ĕç пĕрлешӳĕсен слечĕ пулĕ, ачасен пултарулăх ĕçĕсен выставки ĕçлĕ. «Сывлăх» спорт шкулĕпе Муркаш шкулĕ патĕнчи спорт лапамĕнче спорт ăмăртăвĕсем иртĕç.

Уявăн официаллă пайĕ 11 сехетре уçăлать. Округ пуçлăхĕ Алексей Матросов кăçалхи уй-хир ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарĕ. Уява пынисене хăнасем саламлĕç.

Выставка-ярмăркка юрă-ташăпа та пуян пулĕ. Территори пайĕсенчен килнĕ художество пултарулăх ушкăнĕсем уява пынисене кунĕпех юрă-ташăпа савăнтарĕç.

Çитсе курăр, кичем пулмĕ!

**Анатолий БЕЛОВ.**

# Хастарлăхĕ иксĕлми



*Сăн ӳкерчĕкре Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан хастар çынна Алевтина Семеновăна куратăр. Вăл ĕç ĕмĕрне вырăс чĕлхипе литература учителĕнчен пуçланă, нимĕç чĕлхи те ăна сывăх, педагогика стажне 25 çула çитернĕ. Хыççăн вырăнти культура ĕçне кусă, ку енĕпе 10 çул ытла тăрăшать. Çавна май ачасемпе те, аслисемпе те тачă ĕçлесе пырать, вĕсемпе ал ĕç ăстисен кружокне йĕркеленĕ. Халĕ ятарлă çар операцийĕ валли маскировка сеткисем çыхаççĕ. Вăл обществăлла ĕçре яланах хастар.*

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Пенсисем

# Пенсисене 7,5 процент ӳстереççĕ

Раççейре ĕçлемен пенсионерсен пенсийĕсене 2024 çулта 7,5 процент индексацилеççĕ. Çакă вăл РФ Экономика министерствин макропрогнозĕпе палăртнă инфляци шайĕнче. Çапла вара пенсин вăтам виçи 23,4 пин тенкĕпе танлашать.

Кун пирки «Коммерсантъ» çырать, çакна Социаллă фонд бюджечĕн проектне çирĕплетнипе сăлтавлать.

Хаçат асăннă тăрăх, Социаллă фондăн 2024 – 2026 çулсенчи бюджечĕн проектне правительство ларăвĕнче сентябрĕн 22-мĕшĕнче ырланă. Ку вăл – Раççей пенси фончĕпе социаллă страховани фондне пĕрлехи структурăна пĕрлештернĕ хыççăнхи тата кăçалтан тытăнса ĕç паракансем валли страховани взносĕсен пĕрлехи тарифне пурнăça кĕртнĕ хыççăнхи пĕрремĕш бюджет проекчĕ.

«Коммерсантъ» палăртнă тăрăх, 2024 çулта Социаллă фондăн пĕтĕмĕшле бюджечĕ 16,2 трлн тенкĕпе танлашать. Вăл шутран 16 трлн тенки страховани взносĕсенчен тата федераци бюджетĕнчен уйăракан трансфертран пухăнать, ытти сумми – 2023 çулхи бюджетра юлнă укça-тенкĕ. Бюджетăн хальхи версийĕнче инфляци шайĕ кăçал 7,5 процент пулать, 2024 çулта вăл 4,5 процента, 2025 – 2026 çулсенче 4 процента çити чакать.

2024 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен çĕнĕрен шутласа палăртнă май, ĕçлемен пенсионерсен ватлăха пула паракан страхланă пенсийĕсен вăтам виçи 1,6 пин тенкĕ ӳсет, 23,4 пин тенкĕпе танлашать.

Фондăн бюджет расхучĕсен калăпăшĕпе иккĕмĕш статйи – ачаллă çемьесене пулăшасси. Пĕрлехи пособи, ача амăшĕн капиталĕ, ача çуралсан пĕр хут паракан пособи тӳлеме тата ытти енĕпе 2024 çулта фонд 2,2 трлн ытла тенкĕ расхутлать.

Виççĕмĕш вырăнта – больничнăйсемпе, çие юлнă хĕрарăмсене тата ача çуратнă амăшĕсене, ача пăхма паракан укça тӳлевĕсем. Çавна валли çитес çула 1,1 трлн тенкĕ пăхса хунă.

**Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Республикăра

## Ăмăртусене хатĕр

Чăваш Ен наци кĕрешĕвĕн пĕрремĕш тĕнче ăмăртăвĕсене ирттерме хатĕр. Унта спортăн çичĕ тĕсне тата пĕр-пĕринпе кĕрешессин ултă тĕсне кĕртнĕ. Ăмăртусене 25 çĕршывăн пĕрлештернĕ командисем хутшăнма кăмăл тунине пĕлтернĕ.

Ăмăртусене йĕркелесе ирттерме ĕç ушкăнĕ çирĕплетнĕ. Ăмăртусем «Чебоксары-Арена» пăр керменĕнче октябрĕн 4 – 8-мĕшĕсенче иртеççĕ.

Ăмăрту кунĕсенче кĕрешӳсене тӳрĕ трансляци мелĕпе Вăйăсен официаллă сайтĕнче кăтартма палăртаççĕ. Финалти тытăçусене Раççей чи лайăх ринг-анонсерĕ Александр Загорский ертсе пырĕ, вĕсене тӳрĕ эфирта «Матч Боец» телеканалпа пăхма май пулать.

## Ятарлă паллă

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев патшалăх граждан службине тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланине палăртма ятарлă паллă пурнăçа кĕртесси пирки калакан указа алă пуснă.

Асăннă паллăна хăйсен служба ĕçĕ-хĕлĕнче пысăк кăтартусем тăвакан тата республика аталанăвне палăрăмлă тӳпе хывакан патшалăх служащийĕсене парĕç. Ку паллăна илни «Ĕç ветеранĕ» ята илме право парĕ.

Паллăн эскизне туса хатĕрлеме конкурс ирттереççĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Чăваш Енĕн ĕç тăвакан органĕсенче патшалăх службинче 1,5 пине яхăн çын ĕçлет.

## Çĕр улми куравĕ иртет

Регионсем хушшинчи XVI «Çĕр улми – 2024» выставкăна 2024 çулхи февралĕн 29 – мартăн 1-мĕшĕсенче ирттерме планлаççĕ.

Мероприяти йĕркелӳçисем – Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви, çĕр улмин А.Г. Лорх ячĕллĕ федераци тĕпчев центрĕ тата «Агро-Инновации» учреждени.

Форум программинче наукăпа практика конференцийĕсем, тематика çавра сĕтелĕсем пăхса хунă, çавăн пекех çĕр улмин хамăр çĕршыври тата чикĕ леш енчи сорчĕсене кăтартаççĕ, вĕсенчен хатĕрленĕ блюдăсене тутанма май пулать, интереслĕ татах ытти мероприятисем пулаççĕ.

**«Чувашинформ».**

Çырăнтару – 2024

## Октябрĕн 2 – 12-мĕшĕсенче – йӳнетнĕ хакпа

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2024 çулхи январьтен илсе тăма почта уйрăмĕсенче вунă кун хушши йӳнетнĕ хакпа – 493 тенкĕ те 44 пуспа – çырăнтараççĕ.**

**Декада хыççăн 534 тенкĕ те 96 пуспа çырăнмалла пулать.**

**Редакци.**


**8 октября – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**
**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом. 8-10.

# «Хочешь быть на туристической карте – подтягивай инфраструктуру…»

## Для депутата Госдумы Аллы Салаевой родная республика по-прежнему остается в приоритете

**– Заметно, как вы увлечены работой, как у вас горят глаза. Что-то поменялось за последние полтора года в отношении к депутатской деятельности, к республике в целом? На наш взгляд, вы один из тех народных избранников, который постоянно в контакте со своим округом, избирателями, жителями региона.**

– Ни для кого не секрет, что для меня всегда важен результат моей деятельности, начиная с тех времен, когда я еще работала в команде города (Авт. – должность заместителя главы администрации города Чебоксары по социальным вопросам Алла Леонидовна занимала до 2020 года). У нас есть результаты, которые остались в истории, и мы ценим то, что создано. Аналогично и в республике есть программы, которые мы вместе с Главой Чувашии Олегом Николаевым реализовали. Важно, что все эти начинания получили продолжение.

Когда я только приходила в Госдуму, мы с Олегом Алексеевичем проговорили, что социальная сфера Чувашии по-прежнему останется в зоне моего внимания.

За двухлетний депутатский срок, конечно, закрепилась уверенность в себе. Поначалу было непросто, поскольку до этого почти 16 лет я проработала в исполнительных органах власти, законодательная же деятельность строится несколько иначе.

В Комитете по туризму я возглавляю рабочую группу по развитию детского туризма. И у этого направления уже есть своя история и ощутимые результаты. Например, минувшим летом для пяти тысяч юных жителей Чувашии в рамках федеральной программы и гранта, полученного при поддержке республиканского бюджета, удалось организовать бесплатные путешествия по региону. На эти цели направлено более 35 млн рублей. Главное, что проект развивается дальше.

**– В прошлом как вице-премьер региона вы курировали социальный блок, возглавляли Министерство образования Чувашии, и даже сейчас, будучи в Комитете Госдумы по развитию туризма и туристической инфраструктуры, тема образования вас не отпускает. Какие последние достижения вы бы выделили в этой сфере? И каковы следующие шаги по улучшению качества образования в республике?**

– Отмечу, что стратегический план по созданию равных условий для детей независимо от их места проживания, который был разработан совместно с Олегом Николаевым, еще когда он стал Главой Чувашии, а я была назначена вице-премьером, а затем министром, сейчас активно реализуется. Напомню, когда в республике стали строиться новые школы, появился определенный дисбаланс между новыми учреждениями образования и старыми, куда с серьезным ремонтом не заходили лет 40 — 50. Мы видели, что условия для детей совершенно разные. А ведь и городским, и сельским ребятам нужна мотивация, они должны быть конкурентоспособными, иметь возможность заниматься в кружках и секциях, развивать свои таланты и способности.

Стимулы необходимы и молодым учителям на селе. Будем честными, когда твоя школа, в которой ты преподаешь или как молодой специалист планируешь работать, соответствует всем стандартам и ничуть не уступает городской – более привлекательно.

Поэтому в стратегическом плане нами было заложено строительство новых школ там, где они действительно нужны, там, где этот вопрос не решался десятилетиями. Например, сейчас в рамках концессионного соглашения строятся сразу три школы в Новочебоксарске, еще по одному образовательному учреждению возводится в Кугесях и чебоксарском микрорайоне «Солнечный». Там школы остро необходимы. Мы провели серьезную аналитику с демографической точки зрения, выяснили, сколько примерно ребят и в каком году пойдут в школу, и представляли себе перспективу каждого муниципалитета.

На новый, федеральный, уровень вышла программа по обновлению старых школ. На следующий год в числе капитально отремонтированных и комплексно модернизированных учреждений образования республики уже будет более ста школ. Как в свое время с этой проблемой мучились директора и родители! Поэтому решение, принятое Главой Чувашии еще до того, как заработала аналогичная федеральная программа, было действительно важным и своевременным.

За модернизацией школ должны пойти садики и детские лагеря. В Чувашии этот процесс уже запущен. Хотелось бы отметить и большое внимание к этой теме Президента страны Владимира Путина. Ведь это по его поручению заработала инициированная «Единой Россией» федеральная программа по масштабному капремонту школ. Аналогичные проекты готовятся и по обновлению дошкольных учреждений. Есть поручение Президента и по детским лагерям, и Совет Федерации держит этот вопрос на контроле.

То есть сегодня мы говорим не только про образование, но и про отдых и оздоровление подрастающего поколения. Первые ласточки уже есть: два лагеря в Чебоксарах и Цивильском округе вошли в этот проект. В бюджете Минпросвещения РФ заложен миллиард рублей на создание модульных легковозводимых корпусов в лагерях.

**– Становится понятно, что депутат Госдумы – не просто высокий статус, а действительно сложная и насыщенная работа, многие даже не представляют, какая активная жизнь кипит в стенах нижней палаты…**

– Это так. Оценка эффективности работы депутата – это в первую очередь его активность с точки зрения законотворчества. Объясню, как происходит это на практике. Я возглавляю рабочую группу по детскому туризму. Определенное сообщество, скажем, туроператоры обращаются к нам с острой проблемой, например, просят принять и включить в законодательство выезд по «выделенкам» для туристических автобусов. Мы приглашаем туроператоров, экспертов, общественников, представителей регионов и всех органов власти – министерств просвещения, здравоохранения, транспорта и других заинтересованных ведомств. Начинается диалог, идет проработка деталей, проводятся глубокий анализ, экспертная оценка.

Конечно, депутатская деятельность – это не только присутствие на заседаниях, задача парламентария в том, чтобы разрабатывать и предлагать жизненно важные законопроекты, взаимодействовать с общественными организациями, заниматься вопросами своего региона, вести прием обращений граждан, за которым часто следует правозащитная работа. Но даже быть на заседаниях тоже значимо, потому что принимающиеся законы – жизненно важные для людей. И если законотворческая «машина» будет неповоротливой, медленной, равнодушной, процесс затянется, и решение многих проблем застрянет на месте. А ведь есть вопросы, которые требуют безотлагательного решения – например, касающиеся поддержки участников СВО, присоединения к России новых регионов.

**– Многое изменилось в стране в отношении к бизнесу, отдыху, путешествиям. Ситуация сегодня сильно отличается от той, что была даже три года назад. Что уж говорить о почти тридцати годах развития туриндустрии, прошедших с тех пор, как был принят федеральный закон «Об основах туристской деятельности в Российской Федерации». Законодательству пора обновляться?**

– Действительно, закон о туризме не менялся очень давно. Сейчас туризм – это реальный сектор экономики, на котором можно неплохо зарабатывать. Сформировано экспертное сообщество, определена общая стратегия, за депутатами закреплена законодательная история развития туризма в России. И наш комитет плотно и точечно, каждый в своей рабочей группе (детский туризм, экологический туризм, речной туризм и так далее) разрабатывает по нему нормотворческие инициативы. Проект нового закона председатель Комитета по туризму Сангаджи Тарбаев на днях представлял на рассмотрение премьеру Правительства России Михаилу Мишустину.

**– И детский туризм в нем также будет прописан?**

– Прежде всего, будет определено, что такое туризм вообще, ну и детский туризм в частности. Ведь такого понятия ранее вообще не существовало. Между тем туроператорам, которые делают в этом деле первые шаги и выстраивают стратегию развития вхождения на этот рынок, необходимо четко понимать, какие существуют требования, законодательные нормы в этой сфере, как они себя могут классифицировать, как организовывать путешествия так, чтобы это было безопасно для детей. В законодательстве однозначно будет зафиксировано и то, кто вообще может проводить детям экскурсию, то есть это должен быть человек, который прошел соответствующую аттестацию, сертификацию.

**– У журналистов сложилось ощущение, что в Чувашии в одном из первых регионов заговорили о детском туризме. Во всяком случае, у нас тема появилась раньше, чем на федеральном уровне.**

– Пожалуй, просто время пришло. Конечно, мы много думали об этом, запускали у себя в регионе классные проекты. Потому что для нас действительно было важно показать детям родную республику во всей ее красе, причем не только ее природу, достопримечательности, но и современные предприятия. Мы искренне считали, что это ключ к воспитанию патриотизма, и на федеральной повестке это сейчас подтверждается.

Запуская детский туризм в Чувашии, мы, конечно, понимали все эти моменты. Сначала проекты стартовали только в Чебоксарах, мы стимулировали городских ребятишек путешествовать в каникулы по муниципалитетам, организовывали квесты, потом лучшие практики масштабировали уже на всю республику.

**– На самом деле многие знакомые путешествуют по республике, открывают для себя новые места, делятся интересными находками...**

– И это здорово! Причем дети сегодня сами могут подсказывать своим родителям, где обязательно стоит побывать. Считаю, что вместе с региональным Министерством образования и Союзом женщин Чувашии мы воплотили в жизнь очень нужный и важный проект «Дневник счастливого школьника». В некоторой степени он оказался настоящей инновацией на уровне России. Дневник состоит из 28 позиций – «точек притяжения», которые непременно нужно посетить не только детям, но и взрослым. Это наши национальные парки и заповедники, ведущие предприятия и фермерские хозяйства, это и великолепные музеи в честь именитых деятелей и выдающихся земляков. Настоящей находкой лично для меня стал Музей натурального хозяйства чувашского крестьянина в Верхних Ачаках Ядринского округа – это настоящий уголок крестьянского быта, наполненный особой атмосферой деревенской жизни. И я рада, что он тоже нашел свое место в дневнике путешествий.

**– Задумка с дневником и правда удачная. Даже странно, что его не придумали раньше.**

– Как я говорила, всему свое время. Сначала надо, как говорится, дом в порядок привести, а потом только звать гостей. Вот почему я просила поддержать этот проект наши министерства экономики, культуры, образования, муниципалитеты, ведь это наше общее дело. Понятно, что все желаемые «точки» невозможно охватить. Поэтому пока мы зафиксировали 28 объектов. И нужно понимать, что вокруг этих центров притяжения необходимо создавать соответствующую инфраструктуру.

**– Ребенок – пусть и не большой, но все же турист со своими требованиями…**

– Верно, причем самый честный. Словно лакмусовая бумажка он откроет вам все плюсы и минусы. Но я хотела бы обратить внимание и на то, насколько важно самим муниципалитетам, музеям, паркам, предприятиям включиться в эту работу. Ведь туризм может стать хорошим импульсом для дополнительного развития.

**– Кстати, как вы общаетесь с главами муниципальных округов, чаще на официальных мероприятиях или рабочих встречах?**

– Считаю, что со всеми выстроены хорошие взаимоотношения. В каждый свой приезд я стараюсь провести рабочую встречу, решить проблемные вопросы.

Вспомнить хотя бы, какое внимание нам удалось привлечь к Мариинскому Посаду – мы провели там выездные совещания, встречи, общественные слушания по развитию туристической привлекательности купеческого городка на Волге. Результат не заставил себя ждать. Мариинский Посад стал победителем VIII Всероссийского конкурса лучших проектов создания комфортной городской среды, проект «Государева гора» был признан одним из лучших в категории «Малые города численностью до 20 тысяч человек» и получил федеральное финансирование.



Такую же работу мы планируем организовать и в Алатыре.

**– Судя по новостям из вашего телеграм-канала, вы часто встречаетесь с населением, многим помогаете. Существует ли в вашей деятельности такое понятие как наказ депутату?**

– Ну, во-первых, есть народная программа «Единой России», в которую были включены все предложения и пожелания наших избирателей, поступившие во время предвыборной кампании. Туда «вшиты» и школы, и ремонты, и спортивные сооружения, и многие другие заботы, которые мы держим на контроле. Во-вторых, есть мои обязательства как депутата, представляющего интересы региона. Ведь я приезжаю в Чувашию не к чужим людям, а к своим землякам, и для меня крайне важно непременно выполнить наказ, если я кому-то что-то пообещала.

У меня в округе 13 муниципалитетов, и в каждом из них раз в год у меня проходит встреча с активом, лидерами общественного мнения, депутатами местного уровня, главами администраций. В рамках таких встреч обязательно веду прием граждан в приемной «Единой России», и вопросы, с которыми они ко мне приходят, беру в работу. Думаю, что за два года, что я являюсь депутатом, могу смело смотреть этим людям в глаза.

А есть темы, которые просто невозможно пропустить мимо сердца. Так, например, получилось с капремонтом квартиры участника Великой Отечественной войны Михаила Сорокина, ветерана отрасли здравоохранения, который имел право на такую поддержку, но по своей скромности долго не обращался за помощью. Мы сразу связались с руководством Чебоксар, и надо отдать должное главе администрации Денису Спирину, который взял этот вопрос на личный контроль. Квартиру ветерану оперативно отремонтировали, я лишь помогла Михаилу Григорьевичу сантехникой.

За душу тронуло и обращение одной из матерей участника СВО из Красночетайского округа. За день до этого ей позвонил сын, который долго не выходил на связь и сообщил, что ранен и не может даже добраться до госпиталя. Отчаявшаяся женщина пришла ко мне в слезах и поделилась болью своего материнского сердца. Мы начали искать, звонить. Удалось связаться с моим коллегой – Бадмой Башанкаевым, сейчас он уже председатель Комитета Госдумы по здравоохранению, а тогда как военврач находился в зоне СВО. Благодаря ему удалось найти нашего бойца, перевезти его в госпиталь, вылечить. После этого он приезжал домой в отпуск к родным. Ну а сейчас снова защищает нашу Родину на передовой. Я искренне благодарна людям, которые меня тогда поддержали и помогли матери найти сына.

**– Алла Леонидовна, большое вам спасибо. Считаю, что мы должны беседовать чаще. Нам нужна лента добрых новостей. Пусть их будет больше...**

Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Оринин территори пайĕ

***Оринин, Лапкас, Çĕньял Оринин, Чамăш, Патаккасси, Вăрманкасси, Лантăш, Пăсăрман, Пиккикасси, Мулкачкасси, Тереç, Çеменкасси, Атапай, Сентимĕр ялĕсем.***

## Çыннисем пуçаруллă, пуçлăхĕ хастар



**Орининсем кăçал Çимĕк уявне савăнăçлăн паллă тунă.**



**Масарсем çинче субботниксем ирттересси йăлара. Çамрăк волонтерсем те çак ĕçрен айккинче юлмаççĕ.**



**Çеменкасси ялĕ патĕнчи масар çине каймалли çула пĕлтĕр депутатсен округ Пухăвĕн депутачĕ Павел Вязов спонсорла пулăшу шучĕпе туса панă.**



**Атапайри Новая тата Адабайская урам çулĕсене кăçал çул-йĕр фончĕ шучĕпе юсанă.**



**Чамăшсен халĕ çĕнĕ шыв башни. Ăна республика программипе хута яма май килнĕ.**

Çапла калас килет Муркаш муниципалитет округĕн Оринин территори пайĕнче пулса курнă хыççăн. Шăпах çак енсем пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ те ĕнтĕ хальхи вăхăтра ял çыннисен пурнăçне лайăхлатса пырассипе, вĕсен кулленхи ыйтăвĕсене ăнăçлăрах татса парассипе. Территори пайне кĕрекен 14 ялта вара ыйтăвĕсем те çителĕклех пулни иккĕлентермест.

Вырăнсенче ирттерекен тĕл пулусене хутшăннă май, çынсене икĕ ушкăна уйăрма пулать. Пĕрисем ыйтма çав тери лайăх хăнăхса çитнĕ: пирĕн ку çук, çавна туса памалла, кам пулăшĕ, ыйтăва хăçан татса параççĕ е ытти те. Теприсем вара ытларах хăйсем çине шанма тăрăшаççĕ, тĕрлĕ çул-йĕр шыраççĕ, ыйтăвĕсене те пĕрле татса параççĕ. Оринин тăрăхĕнче пурăнакансем те çавăн пеккисен шутĕнче.

Хальхи вăхăтра ял пурнăçне хăтлăрах те меллĕрех тăвассипе, ялти инфраструктурăна аталантарассипе республика шайĕнче тĕрлĕрен программа сахал мар. Паллă ĕнтĕ, кĕтсе ларнипе пулмасть. Кун пек программăсене хутшăнма ĕç хучĕсем хатĕрлессипе, конкурссене хутшăнассипе сахал мар хăшкăлма тивет. Апла пулин те çакăн усси те куçкĕрет. Самай расхутлă ĕçсене чиперех пурнăçлама май килет.

Орининсем акă 2021 çултах хушса финансласси шучĕпе территорисене хăтлăлатса илемлетессипе республика программине хутшăнса харăсах 8 объектра пĕтĕмĕшле 7,7 млн тенкĕлĕх ĕçсем туса ирттерме пултарнă.

Республикăра шыв уçламалли башньăсене тĕпрен юсассипе Строительство министерствин ятарлă программи вăйра. Кашни çулах унта хутшăнса Оринин тăрăхĕнчи ялсенче башньăсене çĕнетме тăрăшаççĕ. Кăçал та çапла майпа Вăрманкассинчи, Чамăшри, Мулкачкассинчи Центральная урамри шыв башнисене улăштарма май çитернĕ.

Территорири 14 ялта йĕркеллĕ çулсăр урамсем те çук мар-ха. Пуррисене те юсасах тăрас пулать. Çапла вара çул-йĕр фончĕ шучĕпе кăçал Атапай ялĕнчи Новая тата Адабайская урамсенчи çулсене юсама пултарнă.

Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене кая хăвармасăр татса парассипе республикăн пуçарулăх бюджечĕн программи кунта анлă çул тупнă темелле. Пĕлтĕр асăннă программăна хутшăнса Сентимĕр ялĕнче çул юсассипе калăпăшлă ĕçсем туса ирттернĕ, ĕçсене 6 млн ытла тенкĕлĕх пурнăçланă.

Ял çыннишĕн шыв ыйтăвĕ пĕлтерĕшли куçкĕрет. Çавна май пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе кăçал ĕçе кĕртекен объектсем пурте ялсенчи шыв сечĕсене юсассипе çыхăннисем. Объекчĕсем вара харăсах тăваттă. Тĕрĕссипе объектсенче ĕçсем вĕçленнĕ ĕнтĕ, хăшне-пĕрне йышăнасси кăна юлнă.

Акă Тереç ялĕнче пурăнакансем хăйсен ялĕнчи шыв пăрăхĕсене улăштарнă. Юсав ĕçĕсене «Строительная компания «ПЛАТИНУМ» чикĕллĕ яваплăхлă общество контрактпа 2 млн тенкĕлĕхе яхăн туса ирттернĕ.

Патаккасси ялĕнче пурăнакансем те шыв ыйтăвне татса панă темелле. Кунта ĕçсене «АЛЬЯНССТРОЙГРУП» ООО пурнăçланă. Ĕçсен калăпăшĕ 2 млн та 300 пин тенкĕлĕхе яхăн.

Чамăш ялĕнче кăçал шыв уçламалли башньăна республика программине хутшăнса çĕнетме май килнĕ пулсан, ялти шыв пăрăхĕсене çынсем хăйсем хутшăннипе юсас тенĕ. Шутланă – тунă. Халĕ ĕнтĕ шыв башни те, шыв пăрăхĕсем те йĕркеллĕ. Апла пулсан малашнехи çулсенче çынсене ĕçмелли шыв ыйтăвĕ канăçсăрлантармалла мар.

Лапкас ялĕнче те халĕ шыв пăрăхĕсем çĕнĕ. Çынсем пăрăхсене хăйсем хутшăннипе пуçарулăх бюджечĕн программипе çĕнетме кăмăл тунă. 2 млн та 100 пин тенкĕлĕх ытла ĕçсене «СК «ХАСТАР» ООО туса ирттернĕ.

Сăмах май, пуçарулăх мелĕпе çитес çул пурнăçа кĕртме республика конкурс тĕрĕслевĕ витĕр тухнă 3 проект хатĕр ĕнтĕ. Вĕсен проектпа смета документацийĕ хатĕр. Татах тепĕр 3 проект хатĕрлесе çитерме те шанăç пур. Апла пулсан хăтлăх ĕçĕсем çитес çул та ялсенче анлăн пулса пырĕç.

Çитес çулсенчи тĕллевсем шутĕнчех территорири плотинăсене, ытти гидротехника сооруженийĕсене юсаса йĕркене кĕртесси те. Ку тĕллевсем те пурнăçланаççех тесе шанас килет. Мĕншĕн тесен ку тăрăхра пурăнакансем туса парасса кĕтсе ларма хăнăхман, хăйсем пуçаруллă.

Территорири ялсенче тасалăх, тирпейлĕх ыйтăвĕсене яланах тимлĕхре тытма тăрăшаççĕ. Субботниксем ирттерессине манăçа кăлармаççĕ.

Ял старостисем хальхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Ытларах чухне ял çыннисемпе тӳрĕ çыхăну вĕсем урлă пулса пырать. Территори пайĕн пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, старостăсем пулма активлă, пуçаруллă çынсене суйланă. Ытларахăшĕ вара çамрăксем. Чи хастаррисен шутĕнче Валентина Пушкова Атапай ялĕн старостине Сергей Колбасова, Мулкачкасси ялĕн старостине Павел Иванова, Чамăш ялĕн старостине Андрей Артемьева асăнчĕ.



Оринин тăрăхĕ тесен, кунта спорт ĕçне-хĕлне çӳллĕ шайра йĕркелесе пынине асăнмасăр ниепле те май çук. Район шайĕнче асăннă территори пайĕн спорт командисем хутшăнмасăр пĕр ăмăрту та иртмест темелле. Çитĕнĕвĕсем те курăмлă. Çакна Валентина Юрьевнăн ĕç пӳлĕмне кĕрсен те курмасăр пултараймастăн. Вуншар кубок, диплом, Хисеп грамоти, Тав хучĕ. Кунпа пĕрлех вырăнта ирттерекен йăлана кĕнĕ ăмăртусем те çук мар, вĕсем те çӳллĕ шайра иртеççĕ.

Территорири ветерансен тата пенсионерсен канашĕсем активлăх кăтартаççĕ. Вĕсене Валерий Вязов тата Виталий Иванов ертсе пыраççĕ. Ветерансем хушшинче тĕрлĕ мероприяти сахал мар иртет: йĕлтĕр эстафети, спорт фестивалĕ, шашка тата шахмат ăмăртăвĕсем т. ыт. те. Ватă çынсен кунне уявласси, юбилярсене, мăшăрсене чысласси йăлана кĕнĕ.

Çапла, Оринин территори пайĕнчи ялсенчи çынсем ĕçре те, спорт мероприятийĕсенче те – малтисен ретĕнче. Кунпа пĕрлех вĕсем юрă-ташăра та маттур. Ял кунĕсем, Çимĕк уявĕ вырăнти культура ĕçченĕсем активлă хутшăннипе епле çӳллĕ шайра иртеççĕ. Орининти халăх театрĕ хăй мĕне тăрать. Сăмах май, театр кăçалхи ноябрь уйăхĕнче хăйĕн 105 çулне паллă тума хатĕрленет.



**Павел ИВАНОВ,**
**Мулкачкасси ялĕн старости:**

– Ял çыннисем мана хăйсен старости пулма шанчĕç. Икĕ çул ĕнтĕ çак тивĕçе пурнăçлатăп. Шанăçа вара тӳрре кăларас пулать. Пирĕн территори пайĕн пуçлăхĕ Валентина Юрьевна хăй питĕ активлă та пуçаруллă çын. Çавăнпа та пирĕн, старостăсен те, ăна пĕрлехи ĕçре май пур таран пулăшса пымалла тесе шутлатăп. Ялсенчи тĕрлĕ ыйтăва та пĕччен-иккĕн ниепле те татса пама май çук. Йышпа вара хальхи вăхăтра темĕн те тума пулать.

Хамăр пĕрле тăрăшнипех юлашки çулсенче пирĕн тăрăхри ялсенчи çынсен пурнăç условийĕсем лайăхланса пынине пурте куратпăр. Акă пирĕн ялта пурăнакансене шыв ыйтăвĕ вĕçĕм калаçтаратчĕ. Республика программине хутшăнса кăçал Центральная урамри шыв башнине улăштарма май килчĕ.

Пирĕн ялта пурăнакансен çитес çулхи тĕллевĕсем те пĕчĕк мар. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ялти шыв сечĕсене çĕнетме май килет пулĕ тесе шухăшлатпăр. Кунсăр пуçне тата çапла майпах Уралеки урамĕнче çул юсама палăртатпăр. Хамăр тăрăшуллă та пĕр шухăшлă пулсан, пĕрлехи ыйтусене татса паратпăрах.

Татах тепĕр тĕллев вăл – ял патĕнчи плотинăна юсаса йĕркене кĕртесси. Çăлта, шахтăра юсав ĕçĕсем туса ирттерес пулать. Ĕçсене пурнăçлама проектпа смета докуменчĕсем хатĕрлесе территори пайĕ заявкăпа Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствине тухрĕ ĕнтĕ. Республика программине хутшăнса Чăваш Республикинчи Экологи культурин тата çут çанталăкпа тирпейлĕ усă курассин çулталăкĕнче çак ыйтăва та татса пама май пулĕ тесе шухăшлатăп.

**Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Октябрĕн 1-мĕшĕ – Ватă çынсен кунĕ

# «Кĕмĕл» ăру – хăватлă çар

«Кĕмĕл» ăру текен ăнлав юлашки çулсенче пирĕн калаçăва хăвăрт кĕрсе вырнаçрĕ. Аслă ÿсĕмри, тивĕçлĕ канури çынсене çапла калани питĕ илемлĕ илтĕнет, вырăнлă та.

Чăваш Енре 2023 çул пуçламăшĕ тĕлне аслă ăрури çынсем пурĕ 295 пин çын шутланнă. Ку вăл – Чăваш Енре пурăнакансен пĕрре тăваттăмĕш пайĕ. Çак шута 62 çул тултарнă тата аслăрах арçынсене тата 57 тултарнă тата аслăрах хĕрарăмсене кĕртнĕ.

Республикăра 90 çул тултарнă тата аслăрах çынсем 5 пине яхăн.

Чăваш Енри «кĕмĕл» ăру йышĕнче 206 пин çын – хĕрарăм, ыттисем – арçынсем. Вĕсен 58 процентĕ – хулара пурăнакансем. Хуласенче пĕр пин арçын пуçне 2596 хĕрарăм тесе шутламалла, ялсенче – 2026.

Çак ÿсĕмрисен йышĕнче те çемье çавăракансем пур. Пĕлтĕр ЗАГС органĕсенче 90 мăшăр хăйĕн хутшăнăвĕсене официаллă майпа регистрацилесе çемье çавăрнă.

Социаллă фонд пĕлтернĕ тăрăх, 2023 çул пуçламăшĕ тĕлне республикăра 357 пин пенсионер шутланнă, вĕсенчен 17 проценчĕ ĕçлет.

Ыйтса пĕлни тăрăх, аслă ăру ÿсĕмĕнчисен 2 проценчĕ хăйсен пурăнмалли çуртйĕр условийĕсене «питĕ лайăх» хак панă, 11 проценчĕ – «лайăх», 67 проценчĕ – «юрăхлă» (удовлетворительно).

«Кĕмĕл» ăру çыннисен вăй-хăвачĕ те пысăк: ыйтăм хуравĕсенче ватă çынсен 66 проценчĕ турист е экскурси çул çÿревне тухнă, 17 проценчĕ концертсене пулнă. Кунсерен Интернетпа 21 процент усă курать, вĕсем ытларах чухне хыпарсем вулаççĕ (34 процент), пĕр-пĕринпе социаллă сетьре хутшăнаççĕ (26 процент), тĕрлĕ услугăшăн тата таваршăн укçа куçараççĕ (24 процент).

**Чăвашстат.**

# Чечек илемне туйма пĕлекенсем

«Аслă ăрăва чыс та мухтав» уйăхлăх шайĕнче Муркаш округĕнче Раççей пенсионерĕсен пĕрлĕхĕн вырăнти уйрăмĕнче «Чечек уçланки – 2023» сăн ÿкерчĕксен конкурсĕ иртрĕ. Унта асăннă организаци пайташĕсем – пенси çулĕнчи çынсем – хутшăнчĕç. Конкурс дистанци мелĕпе пулчĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ăсталăх кăтартакансем ытларах пулчĕç, вунпĕр территори пайĕнчен. Хăш-пĕр территоринчен харăсах темиçе çын сăн ÿкерчĕк тăратнă.

Çак кунсенче жюри пайташĕсем конкурс ĕçĕсене хакларĕç, вăл шутра эпĕ те пултăм. Çĕнтерÿçĕсене икĕ номинацире палăртрăмăр. «Манăн садри чи лайăх чечек композицийĕ» номинацире Москакассинчи Галина Голубева палăрчĕ. Ун хыççăнхи вырăна Шарпашри Римма Ефимовăпа Чамăшри Вера Вершкова йышăнчĕç. Виççĕмĕш вырăнта – Муркашри Татьяна Хораськина, Çатракассинчи (Турай территори пайĕ) Валентина Орлова, Шаптакри Маргарита Исакова. Пĕтĕмлетсе каласан вара ку номинацире сад-пахчара чечек лартса ÿстерекенсен ĕçĕпе паллашрăмăр.

«Хирти чечексен чи лайăх композицийĕ» номинацире вара çут çанталăк пархатарне курма пĕлекенсем пулчĕç. Ман шухăшпа черченлĕх шăпах та çакăнта пытаннă. Сăн ÿкерчĕк ăсти Мемеккассинчи Игорь Каргин илемлĕ чечексен уçланкипе киленме май пачĕ. Уйкас Хачăкри Нина Бирюкова сумлă иккĕмĕш вырăнта пулчĕ, Итакачкассинчи Полина Сорокина – виççĕмĕш вырăнта.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

# Пурнăç хĕлхемĕ ан сӳнтĕр

Маларах эпĕ Шомикри интернат çуртăн Каршлăхри стационар уйрăмне çитсе килтĕм, ватă çынсем мĕнле пурăннипе паллашрăм.

Валентина Крылова ветеранпа калаçрăм. Вăл халĕ тăхăрвунă çулта. Ăстăн енчен çирĕп пулни лайăх курăнчĕ, ачалăхран пуçласа ĕмĕр тăршшĕне аса илчĕ. Валентина Михайловна Чул хула облаçĕнче çуралнă, вăрçă вăхăчĕ пирки вăл хурланса аса илчĕ. 1932 çулта çуралнăскер нушине чылай курнă.

– Вăрçă пуçланнине пĕлтерчĕç. Эпĕ ун чухне ача, урамра çынсем васкаççĕ, хытăн калаçаççĕ. Ачасем пурне ăнлансах пĕтермен ĕнтĕ эпир, çапах пысăк хуйхă килсе çапнине чухланах. Кашни кунах арçынсене фронта илсе кайма пуçларĕç. Пирĕн пек ачасем валли тата ватă çынсемпе хĕрарăмсем валли ĕç нумай пулчĕ, кашниех май пур таран фронта пулăшма тăрăшрĕ. Эпĕ 21-мĕш заводра самолетсем валли хатĕрсем тунине астăватăп. Ĕçĕ йывăрччĕ, кунĕпе станок умĕнче ура çинче тăмаллаччĕ, каçпа та ĕçленĕ. Фронт валли посылкăсем хатĕрлеттĕмĕр. 1942 çулта атте вăрçăра вилнине пĕлтерчĕç. Пирĕн çемьере урăх ачасем пулман. Аннепе иксĕмĕрех пурăннă, – аса илет вăл ачалăх çулĕсене.

Çапах та Валентина вĕренсе çын пулас ĕмĕте асран кăларман. Вăл воспитателе вĕреннĕ. Шупашкар хулинче ĕçленĕ, ĕç стажне хĕрĕх çула çитернĕ, «Ĕç ветеранĕ» ят илме тивĕçнĕ.

Валентина Михайловна ĕмĕрĕпех ачасемпе тăрăшнине тата вăл анлă тавракурăмлă пулнине эпĕ лайăх куртăм, унпа калаçма питĕ кăмăллă. «Сана мĕн çинчен сăвă каласа кăтартас, çут çанталăк çинчен, ачалăх çинчен е йывăр пурнăç çинчен?» – тесе ыйтрĕ.

Вăл мана «Одуванчик» ятлă вăрăм сăвва питĕ илемлĕн пăхмасăр каласа тĕлентерчĕ. Ман çан-çурăм тăрăх сивĕ чупрĕ, эпĕ ун пек пултараяс çук пулĕ. Стационар уйрăмĕнче ĕçлекенсем каланă тăрăх, вăл чăн та ку енĕпе яланах маттур. Ахальтен мар ĕнтĕ пилĕк çулта чухнех сцена çине тухма хăнăхнă вăл. Çав ăсталăх унра халĕ те упранать.

2021 çулхи кĕркунне вăл Каршлăхра хӳтлĕх тупнă, ачасене йывăрлăх кӳрес темен, çакăнта пурăнма килĕшнĕ. Унти пурнăçпа кинемей кăмăллă, лайăх пăхаççĕ.

Тепĕр кинемейпе, Мария Сорокинăпа, калаçрăм. Вăл Ярапайкасси тăрăхĕнчен. 1926 çулта çуралнă. Пурнăç йывăр пулнă пулин те, вăл сакăр класлă пĕлӳ илме пултарнă. Ĕмĕре вара вырăнти колхозра ĕçлесе ирттернĕ. Ĕç стажĕ 33 çула çитернĕ.

Иртнĕ çулхи çу кунĕнче ĕç ветеранĕ, тыл ĕçченĕ, тăлăх мăшăр Мария Кузьминична Каршлăха çул тытнă.

Пурнăç нушине самай чăтса ирттернĕ çынсемпе калаçма мана çăмăлах пулмарĕ, вĕсен сăмахĕсем чĕрене тиврĕç. Çакăн пек социаллă учрежденисен ĕçлени питех те кирлĕ. Кунта ăшă, тухтăрсем те, пулăшакансем те яланах çумра.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

# Пĕрле пулсан кун-çул çăмăлрах



***Пĕрле пулсан пурнăç çăмăлрах, чун ыратăвне те, савăнăçне те икке пайлама пулать. Çапла пĕлтереççĕ сăн ÿкерчĕкри хисеплĕ çынсем. Вĕсем – Москакасси территори пайĕнчи Вăрманкас Хачăк ялĕнчи Маргарита Николаевнăпа Геннадий Алексеевич Бирюковсем. Пурнăç çулĕпе вĕсем пĕрле утма тытăннăранпа кăçал 50 çул пулчĕ. Çакна, паллах, мăшăр пысăк телей тесе пĕлтерет.***

***Вĕсем икĕ ача çуратса ÿстернĕ, аслă пĕлӳ панă. Çемье пуçĕ Геннадий Алексеевич ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вырăнти «Передовик» хуçалăхра ĕçленĕ. Каярах Шупашкарти «Дизельпром» предприятире 23 çул тимленĕ.***

***Ĕçне кура – хисепĕ. Тăрăшулăхне тата пултарулăхне шута илсе ăна Чăваш Республикин Промышленноçпа энергетика министерствин Хисеп грамотипе чысланă. Вăл «Ĕç ветеранĕ» ят илме тивĕçнĕ.***

***Мăшăрĕ Маргарита Николаевна вара Шупашкарти «Электроаппаратура» заводĕнче слесарь-сборщица пулса 32 çул ĕçленĕ. Шаннă ĕçе тӳрĕ чунпа пурнăçланă. Икĕ хутчен пилĕк çуллăх ударникĕ пулнă. Маргарита Николаевнăн ячĕ заводăн Хисеп аллейинче те нумай çул хушши пулнă.***

***Халĕ хисеплĕ мăшăр 4 мăнукĕн çитĕнĕвĕсемпе савăнса пурăнать. Бирюковсем ялта та, Москакасси тăрăхĕнче те хисепре, вĕсем общественăлла ĕçре те хастар.***

***– Пĕр-пĕрне хисеплемелле, ваттине сума сумалла, яшшине вара вĕрентмелле, ырă канаш пани усал сунни мар. Пурнăç пĕрре кăна килет, ăна упрама, ĕмĕре тивĕçлĕ ирттерме тăрăшмалла, – теççĕ вĕсем кăмăллăн.***

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

# Ватă çынна хисеплеме манар мар, хамăра та хисеплĕç

Аслă ăрурисен уявĕ... Ку уяв – нумай-нумай çулсен уявĕ. Пĕри телейлĕ – япăх мар пурăнса ирттернĕ çулсемшĕн савăнать, унра çемьепе ачасем ырă йĕр хăварнă, мăнуксемпе киленет, юратнă ĕçре тăрăшнă.

Тепринщĕн вара пурнăç телей шыравĕнче вăхăта ирттернипе асра. Вăрттăнлăх мар, çакăн пек çыннăн чун-чĕринче кичемлĕхпе кураймалăх пухăнать. Пурнăç вăл вăрăм мар, юлашки кунсемпе уйăхсене, тен çулсене те пурте пĕр пек хакламаççĕ.

Ватă çынсен кунĕнче маларах пурнăçран уйрăлнă çын пирки ырăпа асăнса хăварас килет. Çтаппана савăнăçлă, куç умне тӳрех лекекен çын тесех калаймăн. Ытларах чухне ăна асăрхаса та юлаймастăн, кăмăлане кура кăна çынпа сăмах чĕнет е сывлăх сунать. Вăл çулĕпе çамрăк мар пулин те, ăна çынсем ятпа кăна чĕнетчĕç. Ыттисемпе Çтаппан ытлах хутшăнмастчĕ, нумай калаçма та юратмастчĕ. Унăн чунне вара кĕме тăрăшаканах пулмарĕ, ăна уçă калаçăва та илĕртмерĕ. Тен ăна хăй вăхăтĕнче хытă кӳрентерекенсем пулнă.

Пĕррехинче çуллахи кун вăхăт каç еннелле суланнăччĕ ĕнтĕ, пĕчĕк алăк уçăлчĕ те пирĕн картишне хирĕçле пӳртре пурăнакан Çтаппан пускил кĕрсе тăчĕ. Ман патарах пычĕ те айăпа кĕнĕ евĕр сасăпа сăмах хушрĕ.

– Çавăнта вăрман хыçĕнче вăйлă çумăр килни курăнатьха, ман пахчара, хыçалта, утă куписем пурччĕ те кăштах. Кĕртсе пулăшмăн-ши? Пĕр-икĕ наççилкка кăна пулать. Никама та тупаймарăм. Пулăшмăн-ши? – терĕ.

– Мĕнле пулăшайăп-ши, ман куç пачах та курманпа пĕрех вĕт. Атя-ха, кайăпăр, тен пултарăпăр. Эсĕ малтан пырăн, эпĕ сан хыçран ерипен утăлăп, – хуравларăм эпĕ.

Чăн та ути нумай та пулман иккен, икĕ наççилкка кăна. Ерипен пулсан та пахча хыçĕнчен сарай патне илсе çитертĕмĕр. Çумăр айне пачах та пулман ырă шăршăллă утă сăмсана кăтăкларĕ. Ĕç пĕтерсе эпир картишне кĕтĕмĕр, аслати вара юнашарах кĕмсĕртетрĕ. Вăхăтлă вĕçленишĕн Çтаппан савăнчĕ.

Унăн арăмĕ, пӳртрен тухаканскер, ĕçшĕн тав тума хыпаланчĕ, кăштах хаяррине те сĕнчĕ. Эпĕ, паллах, ăна епле хатĕрленине пĕлнĕрен, хирĕçлерĕм кăна. Урам алăкĕ еннелле утнăччĕ, кам туртĕ-ха мана чĕлхерен?

– Степан Лукич, вăт халĕ лайăх хĕрлĕ эрех тата килограмм премĕк сĕннĕ пулсан хирĕçлеместĕм, хаваспах сĕтел хушшине ларнă пулăттăм, – терĕм.

Вăл пĕр сăмах шарламасăр ман хыççăн алăка хупса юлчĕ. Пĕр эрне те çитмерĕ, вăл мана çăл патĕнче кĕтсе тăрать иккен.

– Ман пата кĕр, «Портвейн» тата пĕр кило премĕк туянтăм, атя, хăналатăп. Унсăрăн лайăх мар пулса тухать, – сĕнчĕ вăл.

Пӳрте кĕтĕмĕр те вăл сĕтел çине ĕçмелли, çимелли лартрĕ. Пылак эрехе çĕр грамлă стакана ячĕ те мана сĕнчĕ. Эпĕ вара Степан Лукича тав турăм, вăл манран аслă çын тата кил хуçи пулнине шута илсе хăйне малтан ĕçме сĕнтĕм. Акă эпĕ те ун çине пăхса черет кĕтетĕп, пĕрваскамасăр премĕкне тутлă шыва килентсе сыпса çиме тытăнтăм. Çапла эпĕ самай хăналантăм. Çтаппан вара ман çине куç илмесĕр пăхса ларать.

Эпĕ ăна тав турăм та сĕтел хушшинчен тухрăм. Килелле кайнă чухне сывпуллаша тата тепĕр хут чунтан тав туса алă патăм. Эпĕ ăна хисепленишĕн савăнчĕ.

Çав кунтанпа эпир унпа самай туслашрăмăр. Эпĕ ăна хисеплесе Степан Лукич тесе чĕнеттĕм, вăл вара, атте çулĕнче пулсан та, малтан сывлăх сунма тытăнчĕ, йăл кулса илетчĕ.

Кунта эпĕ мĕн каласшăн пултăм-ха? Тен эпĕ шӳтлĕрех саманта илсе кăтартрăм пулĕ. Çапах та çынна хисеплеме, унпа кăмăллă та ăшшăн калаçма тăрăшмалла. Аслă ăру çынни вара çакна уйрăмах кĕтет. Çынна ырă туни ырăпа таврăнать. Аппла пулсан ватă çынсене тимлĕх уйăрар.

**Вячеслав ПАГЕЕВ.**
**Хунтăкасси ялĕ.**

**Асăрхаттару**

# Тивĕшре – урни чирĕ

Ялсем таврашне чăх-чĕп тытма тата çынсем кăларса пăрахнă каяшпа тăранса пурăнма пыракан тилĕсем те урни чирĕ сарăлас хăрушлăха ÿстереççĕ. Çакăн пирки Патшалăх ветеринари службипе Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕ тăтăшах асăрхаттарса тăраççĕ. Çапах та...

Иртнĕ эрнере Тивĕш ялĕнчи пĕр хуçалăха пырса кĕнĕ тилĕне тытнă хыççăн лабораторири тĕрĕслевне янă. Унăн кăтартăвĕ тилĕ урни чирĕпе чирленине çирĕплетнĕ. Ун çинче никĕсленсе авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев тилĕ тытнă вырăнтан 1 километр радиус лаптăка карантина хупма хушу тунă.

Карантин ĕçленĕ вăхăтра çак ĕçсене пурнăçлама юрамасть:

– чирлĕ выльăх-чĕрлĕхе сыватма;

– асăннă территорие производство (технологи) операцийĕсем пурнăçлакан персоналсăр пуçне ют çынсене кĕртме;

– çак территорие урни чирĕпе чирлеме пултаракан выльăхсене е чĕр чунсене кĕртме, енчен те вĕсене уйхчен 179 кун маларах урни чирĕнчен вакцинăламан пулсан;

– чĕр чунсене куçарма тата çĕнĕ ушкăнсене пуçтарма;

– вилнĕ чĕр чунсен тирĕсене сĕвсе илме.

Кунпа пĕрлех чир тупăннă территорире ярмăркксем, выставкăсем, выльăх-чĕрлĕх е чĕр чунсем куçма пултарассине çыхăннă суту-илÿ е ытти ĕçе пурнăçлама юрамасть.

Асăннă чару авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнчен уйрăм хушу пуличчен тăсăлать.

Паянхи куна асăннă территорире ветеринари правилипе пăхнă пек урни чирне хирĕç кĕрешес ĕçсем пыраççĕ.

**Татьяна КИСЕЛЕВА,**
**районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири тĕп выльăх тухтăрĕ.**

**Пирĕн интервью**

# Кил хуçалăхĕ валли те патшалăх пулăшăвĕ пур

***Çĕр ĕçĕпе пурăнакана, выльăх-чĕрлĕх е сад ĕрчетекене патшалăх енчен тĕллевлĕ пулăшу панипе пирĕн муниципалитет округĕнчи пĕрлешÿллĕ кооперативсемпе тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе пĕрлех килти хушма хуçалăх тытакансем те тĕллевлĕ усă курма пуçларĕç. Паянхи сăмах ялта пурăнакансем хăйсен килти хушма хуçалăхĕсенче хăй тĕллĕн ĕçлекенсем пулса регистрациленни пирки. Çакă ăнсăртран мар, мĕншĕн тесен килти хушма хуçалăх тытакансем юлашки вăхăтра патшалăх пулăшăвĕпе анлăн усă курас çул çине тăма пуçларĕç. Çакна валли вĕсем паян Муркаш округ administрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕ урлă патшалăх пулăшăвне тивĕçеççĕ. Кун пирки кĕскен каласа ăнлантарма ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн пуçлăхне Татьяна ПАВЛОВĂНА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Татьяна Валерьевна, кĕр кунĕсем çитнĕ май килти хушма хуçалăх тытакансем те çĕр улми, пахча çимĕç, тымар çимĕç пухса кĕртессине вĕçлесе пыраççĕ. Ытлашши продукцие реализациленĕ çĕрте хăй тĕллĕн ĕçлекенсене патшалăх енчен пулăшу пур-и?**

– Паллах, килти хушма хуçалăх тытакансене, енчен те вĕсем саккунпа килĕшÿллĕн хăй тĕллĕн ĕçлекен пулса регистрациленнĕ пулсан, «Çĕр улмипе пахча çимĕç туса илессине ÿстернине хавхалантарасси» федераци проекчĕ çинче никĕсленсе пулăшасси асăннă проектăн пĕр енĕ пулса тăрать. Çапла вара кăçал килти хушма хуçалăхра харпăр хăй вăйĕпе усă курса туса илсе реализациленĕ купăсташăн, кишĕрпе хĕрлĕ кăшманшăн, хăярпа помидоршăн, суханпа ыхрашăн субсиди виçине çирĕплетнĕ. Вăл пĕр тонна çĕр улмишĕн – 3000 тенкĕпе, пĕр тонна пахча çимĕçпе тымар çимĕçшĕн 2000 тенкĕпе танлашать. Çакна валли федераци укçине 300-шер пин тенкĕ пăхса хăварнă.

**– Чăваш Республикинче килти хушма хуçалăх тытса хăй тĕллĕн ĕçлекен пулса регистрациленнисем мĕнле субсидисене тивĕçейреççĕ?**

– Килти хушма хуçалăх тытса хăй тĕллĕн ĕçлекен пулса регистрациленнисем федераци механизмĕпе усă курса çак субсидисене илейреççĕ:

– çĕр улми тата пахча çимĕçĕн элита сорчĕсене (пахча çимĕçĕн гибрид сорчĕсем те кĕреççĕ) 1 гектар акнă-лартнăшăн;

– юридициллĕ вăйра тăракан предприятисене, çав шутра ял хуçалăх потребитель кооперативĕсене те, харпăр хăй вăйĕпе туса илнĕ продукцие (купăста, кишĕр, хĕрлĕ кăшман, хăярпа помидор, суханпа ыхра) пĕр тонна реализацилесен субсиди çав продукцие туса илме кайнă тăкакăн 30 процентĕнчен иртме пултараймасть;

– аш ăрачĕллĕ пĕр ĕне (тына) усранăшăн пĕр килти хушма хуçалăха 25 пин тенкĕ таран;

– кашни килти хушма хуçалăха сĕт сумалли ĕне (ĕне тума хатĕрлекен тына) тытса усрама ыйтса çырнă кун тĕлне хуçалăхра выльăх миçе пуç пулнине кура, анчах 50 пин тенкĕрен ытла мар;

– пĕр пуç сурăха е çулталăкран иртнĕ качакана çулталăк усрама килти хушма хуçалăх пуçне 12 пин тенкĕрен ытла мар.

Республика пулăшнипе хăй тĕллĕн ĕçлекенсем çак тăкаксене саплаштарайраççĕ:

– туяннă вăхăта 4 çултан иртмен ĕнесене тата тынасене 3 пуç таран туянма;

– туяннă вăхăта çулталăкран иртнĕ 3 – 10 качака е сурăх туянма;

– ĕнене исскуствăлла майпа тухăçлă пĕтĕлентерме 3 дозăран ытла вăрлăхпа усă курмасан;

– Раççейре тата Раççей Федерацийĕпе туслă мар çĕршывсемсĕр пуçне ытти ют çĕршывсенче туса кăларнă ял хуçалăх техникипе ĕç оборудованийĕсене туянма;

– минераллă удобрени туянма;

– çĕрсене агрохими тĕпчевĕ ирттерме;

– вăрлăха лабораторире тĕпчеме;

– хурт-хăмăрпа ĕçлемелли хатĕрсене туянма.

**– Патшалăх пулăшăвĕпе усă курма заявка парассипе паллаштарăр-ха?**

– Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен заявкăсене дистанци мелĕпе парасси ĕçleме пуçларĕ. Ăна валли «Госуслуги» урлă харпăр хăй кабинетне кĕмелле. Кĕрсенех «Государственная поддержка граждан, ведущих личное подсобное хозяйство и применяющих специальный налоговый режим «Налог на профессиональный доход» ене суйламалла та спискран хăвăр усă курас текен патшалăх пулăшăвĕн формине суйласа илмелле, харпăр хăйĕн килти хушма хуçалăхĕн кăтартăвĕсене памалла. Çавăн пекех консультаци илме Муркаш муниципалитет округĕн администрацине ял хуçалăхĕпе экологи пайне пыма юрать.

Патшалăх килти хушма хуçалăх тытса хăй тĕллĕн ĕçлекен тесе регистрациленнисене пулăшусăр хăварманни куç умĕнчех.

**Анатолий БЕЛОВ**
**калаçнă.**

**Россельхознадзор пĕлтерет**

# Çум курăкне аталанма парас мар

Ял хуçалăхне сăтăр кÿрекен çум курăкĕ Раççей Федерацийĕнче сахал мар. Вĕсем шăтаслăх тата упранаслăх енĕпе пысăк тимлĕх ыйтмалан аталанăвĕпе ял хуçалăх культурисенчен те ирттереççĕ. Нÿрĕк нумай туртса, çĕр пулăхлăхĕпе тата хĕвел çутипе туллин усă курса тыр-пул тухăçĕ çине витĕм кÿреççĕ, унăн пахалăхне сисĕмлĕ чакараççĕ. Россельхознадзорăн Чăваш Республикипе Чĕмпĕр облаçĕн управленийĕн специалисчĕсем ирттернĕ тĕпчевсем нумай çум курăкĕ пирĕн тăрăха инçетрен килнине çирĕплетсе параççĕ. Пирĕн паянхи калаçу Чăваш Республикинчи уй-хирте анлă сарăлнă хир сĕлли, йыт пырши тата пиçен пирки. Вĕсемпе хутăшнă тырă-пулăн экспорт çулĕ хупăнни паллă.

**Хир сĕлли.** Пуриншĕн те паллă ку çум курăкĕ Вьетнамра карантинлă ÿсен-тăран шутланать. Унпа кĕрешесси çине асăннă çĕршыври хресченсем пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Тырă-пулă пуссисене ÿсекен хир сĕлли хăйĕн вăрлăхĕпе апат-çимĕçлĕх ÿстерекен тыр-пул пахалăхне чакарать. Çитменнине вăл ÿсен-тăран тутăхне, вутпуççи чирне саракан культура шутланать. Хир сĕлли пулăшнипе ял хуçалăх культуришĕн сиенлĕ шăнасем, трипссем, нематода чирĕ вăй илет.

Ку çум курăкĕн вăрри хăйĕн шăтаслăхне 3 – 4 çул таран упрама пултарать. Çĕре тарăн сухаласан вĕсен ĕмĕр тăршшĕ 7 – 8 çула çитет. Тырăна ампарта упранă чухне хир сĕллин вăрлăхĕ 10 – 20 çул таран тасасăвă пурăнайрать. Çавăнпа та ку çум курăкĕпе кĕрешесси çине ял хуçалăх предприятийĕсен çуллен пысăк тимлĕх уйăрмалла.

**Йыт пырши.** Кашни ана çинчех тĕл пулакан çум курăкĕ. Вăл нумай çул каялла пирĕн тăрăха Египетпа Шри-Ланка çĕршывĕсенчен килсе кĕнĕ те тарăн тымар янă. Çак çум курăкĕ ÿсен-тăран культурисене сăтăр кÿнин пĕр енĕ – вăл ял хуçалăх культурисене чĕрсенке ÿсни. Çавна пула тырă-пулă пуссисем çĕр çумне ир выртаççĕ, йывăррăн пулса пыраççĕ, вырма хăвăртлăхĕ çине витĕм кÿреççĕ. Асăннă ÿсен-тăранăн тунисем тырă-пулăна лексе ăна тасатма хушма тăкак туса параççĕ. Ăна çинипе выльăхсем наркăмăшланма пултарас хăрушлăх та пур.

**Пиçен.** Ытти çĕрти пекех, хирте те ÿсекен пиçенĕн тăван çĕршывĕсем Израильпе Мексика шутланаççĕ. Питĕ вăрăм пурнăçлă тата хăвăрт пĕтерме çук çум курăкĕ шутланать. Кăкланă чухне юлнă кашни пайĕ уйрăммăн чĕрĕлсе вăй илме пултарать. Хĕл кунĕсенче ÿсен-тăранăн çиелти пайĕ шăнса пĕтет пулин те, тымарĕ лайăх хĕл каçма, çуркунне çĕнĕрен чĕрĕлме пултарать.

Паян асăннă çум курăкĕсемпе кĕрешме пур майпа та усă курмалла. Çав шутра Раççей Федерацийĕн территорийĕнче усă курма ирĕк панă пестицидсем те вырăнлă шутланаççĕ.

Çум курăкĕпе кĕрешес ĕçре тĕрĕс çул суйласа илме Россельхознадзор ятарлă сĕнÿсем хатĕрленĕ. Вĕсем ÿсен-тăрана хÿтĕлемелли препаратсемпе ĕçленĕ чух вăл е ку çум курăкĕ тĕлĕшпе хăш препарат эффективлăхĕ пысăкки пирки калаççĕ.

Хирти е ана çинчи çум курăкĕпе эффективлă кĕрешессин пĕр енĕ вăл – кĕркунне пĕчĕк лаптăкри пусăна тарăн сухаласа хăварасси. Пысăк лаптăксенче вара пĕр вăхăтрах культивацилесе сÿрелесси пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Опытлă пахчаçăсем çулленех седерат культурăсемпе анлăн усă кураççĕ. Кĕркунне кун пек культурăсене акса сухалани çум курăкĕсене «çăварлăхлама» пулăшни паллă.

Тăпрари нÿрĕке сыхлас тесе пусăна торфпа, улăмпа, кивĕ пленкăпа, хаçатпа-хутпа, агроволокнопа е урăх япалапа витни те (мульчивировани) çум курăкĕсен аталану çулне хăвăрт хупать. Ку ĕçсене паян та пурнăçлама юрать.

**Россельхознадзорăн**
**Чăваш Республикипе Чĕмпĕр облаçĕн**
**управленийĕ.**

**Сăмах – выльăх тухтăрне**

# Ĕнесен сăвăмне упраса хăварма

***Ялсенче ĕнесен кĕтĕвĕ сахалланчĕ пулин те, килти хушма хуçалăхра хальлĕхе вĕсем пур-ха. Ялта пурăнаканшăн харпăр хăй хуçалăхĕнче ытлă-çитлĕ туса илнĕ тата экологи тĕлĕшĕнчен таса сĕт яланах тĕп вырăнта. Ĕне сывлăхĕ тĕлĕшпе тимсĕр пулни вара тупăш илесси çине самай ура хума пултарать. Пирĕн паянхи калаçу майракаллă шултра выльăхсен гиподерматоз чирĕ пирки. Мĕнле чир-ха вăл, ăçтан пуçланать? Унран сыхланма ĕне хуçин мĕн асра тытмалла? Çак ыйтусем çине хурав шыраса эпир паян районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири выльăх тухтăрне Ирина НИКОЛАЕВĂНА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Ирина Ивановна, хаçат вулакансене малтанах гиподерматоз чирĕн хăрушлăхĕ пирки каласа парăр-ха. Ку чир килти хушма хуçалăхра ĕне тытакансене пурне те шухăшлаттармалла пулĕ?**

– Кирек епле хуçалăхра та сĕт паян куллен-хи укça-тенкĕ çăл куçĕ пулса тăчĕ. Çавăнпах та ку отрасле мал туртăмлă аталантарасси пуринчен те пысăк тимлĕх ыйтать. Кунпа пĕрлех хуçисен ĕне сывлăхĕ çинчен те самантлăха та манма юрамасть. Гиподерматоз – майракаллă шултра выльăхсен тирĕ айĕнче тĕл пулакан кукăр кут (подкожный овод) чирĕ. Çак паразит ĕне выльăх çумĕнче çуркуннепе çулла вăй илет. Шăпах çавăн чухне вăл майракаллă шултра выльăхсен тирĕ çине, çăм айне, 150 – 500 штук çăмарта туса хума пултарать. Çакăн хыççăн хăй вилет. Çапла вара майракаллă шултра выльăх тирĕ çинче чир аталанăвĕ пуçланать. Пĕрремĕш стадире, 4 – 5 талăк иртсен, çăмартаран вĕтĕ личинкăсем тухаççĕ. Вĕсем çийĕнчех тир айне кĕме пуçлаççĕ. Кунта вĕсем çурăм мими еннелле куçса аталанăвăн иккĕмĕш тапхăрне куçаççĕ. Вăл вăхăт çур çултан пуçласа 9 уйăх таран тăсăлма пултарать. Çак тапхăр иртсен, асăннă паразитсем çурăм калăпăшĕнче капсулăсемпе витĕнсе аталанăвăн 3-мĕш тапхăрне çитеççĕ. Ку вăхăт выльăх сывлăхне кура 17 – 43 талăка çити тăсăлать. Урамра çуркунне е çулла хуçаланнă вăхăтра хурса хăварнă çăмартаран личинкăсем выльăх тулашне тухса кĕске вăхăтрах куколкăсем пулса тăраççĕ.

**– Май килнипе пирĕн вулакансене чирĕн паллисемпе паллаштармăр-и? Ăна килти хушма хуçалăхра ĕне тытакан мĕнле сисме пултарать?**

– Килĕшмелле. Кил хуçи хăйĕн ĕнине тăтăшах пăхса тăрать. Çавăнпа та вăл асăннă чире те вăхăтра асăрхама пултарать. Майракаллă шултра выльăхсен гиподерматоз чирĕн малтанхи паллисем: тир çинче юнланса тăракан пĕчĕкçĕ суransем тĕл пулни, выльăхсем апат-çимĕçрен пăрăнни, ĕне кансĕр тата тикĕс мар утни. Ĕнесен тирĕ айĕнче пĕчĕк мăкăльсем тĕл пулни (100 – 150 таранах) тата вĕсем кăшт вăхăтран юхан-суран пулса кайни, юхни чирĕн пуçламăш паллисем шутланаççĕ. Личинка аталанăвĕ выльăх организмне наркăмăшлă япаласем кăларнипе те палăрса тăрать. Ку вара ĕнен продуктивлăхĕ çине ырă мар витĕм кÿрет, сĕт хисепне чакарать.

**– Кĕркунне профилактика тăвасси те çавăнпах çыхăннă пулĕ?**

– Çапла, çак чире вăхăтра ура хурас тĕллевпе çулленех чÿк е юпа уйăхĕнче выльăх тухтăрĕсем майракаллă шултра выльăхăнне юн илеççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсене кĕркунне асăннă чиртен укол тăватпăр. Паян шăпах çак вăхăт çитрĕ те. Ял çыннисем пире ăнланасса шанатăп.

Чир хăвăрт аталаннине ĕне хуçисем хĕл кунĕсем иртсен çеç хăйсем тĕллĕн асăрхама пултараççĕ. Çак вăхăтра ĕнен сĕт антараслăхĕ самай пĕчĕкленет, унăн канăçсăрлăхĕ ÿсет. Çапла ан пултăр тесен асăннă чирпе вăхăтра кĕрешме выльăх тухтăрне явăçтарни, ман шутпа,тĕрĕс çул пулса тăрать. Ял çыннисен хăйсен ĕнисем тĕлĕшпе асăннă сиплев ĕçне вăхăтра иртересисенчен пăрăнса юлас марччĕ. Çак кунсенче вырăнсене тухса шăпах ĕнесене çав чиртен укол тума пуçлатпăр та.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

Наци проекчĕ

# Автомобиль çулĕсен пахалăхĕ лайăхланать

БЕЗОПАСНЫЕ КАЧЕСТВЕННЫЕ ДОРОГИ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствин сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, казначейство кредичĕсен программи пулăшнипе кăçал республикăра «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче 6 çул-йĕр объектĕнче юсав ĕçĕсене срокран маларах вĕçлеме май килнĕ.

Аса илтересшĕн, Чăваш Республики бюджет казначейство кредитне 1 млрд та 188 млн тенкĕ тивĕçнĕ. Çакă çул-йĕр инфраструктурин пĕлтерĕшлĕ участокĕсенче юсав ĕçĕсене васкарах туса ирттерме май парать.

Ку укçа-тенкĕпе 2023 çулта республикипе 49,4 километр автомобиль çулĕсене тата искусствăлла сооруженисене нормативлă шая çитерме палăртаççĕ. Хушма укçа-тенкĕпе кăçалах 14 объектра ĕçсене унччен палăртнинчен маларах вĕçлеме май килет.

Çак вăхăта 6 объектра ĕçсене вĕçлеме пултарнă ĕнтĕ. Вăл шутран икĕ объекчĕ Муркаш муниципалитет округĕн территорийĕнче вырнаçнă. Сăмах республика пĕлтерĕшлĕ «Муркаш – Турай – «Сура» автомобиль çулĕн икĕ участокĕ пирки пырать.

Тĕрĕссипе икĕ муниципалитет округне – Муркаш тата Етĕрне округĕсене çыхăнтаракан асăннă автомобиль çулĕ çинче юсав ĕçĕсене тапхăр-тапхăр икĕ çул хушшинче – 2023 тата 2024 çулсенче туса ирттермелле пулнă. Юсав ĕçĕсене туса ирттерме республика бюджетĕнчен 22 млн тенкĕ, федераци бюджетĕнчен 215 млн тенкĕ уйăрма пăхнă. Кăçал ĕçсене çулăн чи кăткăс участокĕнче – 16+800 км – 17+760 км участокĕнче туса ирттерме палăртнă пулнă. Çул-йĕр юсав ĕçĕсене «Дорстар» чикĕллĕ яваплăхлă общество тăвату уйăх маларах вĕçлеме пултарнă. Çапла вара республикăн казначейство кредичĕн укçи-тенкипе усă курса çитес çул валли палăртса хунă çул-йĕр юсав ĕçĕсене те кăçалах туса ирттерме май çитернĕ. Хушма укçа 100 млн тенкĕне яхăн уйăрнă. 7,5 километр тăршшĕ çул участокне нумаях пулмасть юсаса нормативлă шая çитернĕ. Çапла вара халĕ Муркашран Етĕрнене çитме автомашинăна тавралла М-7 трассăпа вуншар километр хăвалама кирлĕ мар ĕнтĕ.

Çак кунсенче вара асăннă автомобиль çулĕн Муркаш округĕн территорийĕнчи татах тепĕр участокĕнче – Муркашпа Малиновка ялнелле пăрăнмалли çул юпленĕвĕ хушшинче, вăл шутрах Муркаш ялĕнчи Мир урамĕ тăрăх та çула çĕнĕрен сарса тикĕслерĕç. Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, кунти юсав ĕçĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн «О распределении средств республиканского бюджета Чувашской Республики на капитальный ремонт и ремонт автомобильных дорог общего пользования регионального и межмуниципального значения и нанесения дорожной разметки на них, приведения в нормативное состояние автомобильных дорог и искусственных сооружений в рамках реализации национального проекта «Безопасные качественные дороги», на содержание, проведение диагностики и проектирование по капитальному ремонту и ремонту автомобильных дорог общего пользования регионального значения на 2023 год и на плановый период 2024 и 2025 годов» йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн туса ирттерме пăхнă. «Муркаш – Турай – «Сура» автомобиль çулĕн Муркаш округĕн территорийĕнчи 0+000 км – 5+300 км участокĕнче юсав ĕçĕсем ирттерме 2023 çул валли 28 млн та 721,87 пин тенкĕ уйăрнă. Ĕçсене туса ирттерме подряд организацийĕпе – «Элиста» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа 2022 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче патшалăх контракчĕ тунă.

Контрактпа ĕçсене 2023 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче пуçламалла пулнă, юсав ĕçĕсене кăçалхи сентябрĕн юлашки декадинче вĕçлеме палăртнă. Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн строительство, çул-йĕр хуçалăх тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, асăннă участокри юсав ĕçĕсене тĕрĕссипе çак вăхăтчен чылай маларах вĕçлеме пултарнă. Юсав ĕçĕсене каярах юлса тытăнни çак çул çинче маларах асăннă участоксенче юсав ĕçĕсем пынипе çыхăннă. Тин сарнă çул йывăр тиевлă автомашинăсем çӳренипе ванма пултарнă. Халĕ вара çак вăхăта ку çул участокĕнче çул хĕррисене кивĕ асфальт ванчăкĕ сарса çирĕплетсе тухасси тата разметка тăвасси кăна юлнă.

Сăмах май. 2022 çулта «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче федераци тата республика бюджечĕсенчен сахалах мар укçа-тенкĕ уйăрнипе республика пĕлтерĕшлĕ «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» автомобиль çулĕн пирĕн округ территорийĕпе иртекен виçĕ участокĕнче, вăл шутра Çатракасси, Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр ялĕсем тăрăх иртекен çул çинче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Кунпа пĕрлех асăннă наци проекчĕпе муниципалитет çулĕсене те çуллен сахал мар юсаса нормативлă шая çитереççĕ. Кăçал вара «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» çулăн Отаркка ялĕ патĕнчен иртекен çул участокне 2 километр юсанă. Ĕçсене «Дорсервис» ООО пурнăçланă.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: çул-йĕр юсав ĕçĕсем – Муркаш урамĕнче; Турайран Муркаша – тӳрĕ те тикĕс çулпа.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**






Лару

# Асăрхаттару ĕçне вăйлатмалла

Çакăн пек тĕллев лартрĕç Муркаш округ администрацийĕнче иртнĕ эрнере пулнă право йĕркине пăсассине асăрхаттарассин ведомствăсем хушшинчи комисси ларăвĕнче.

Çапла тума сăлтавĕ çук мар. Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн ертӳçи Михаил Мясников калана тăрăх, профилактика ĕçĕсене ирттерсе пынă пулин те, уйрăмах йывăр преступленисене асăрхаттарассипе çителĕксĕртерех ĕçленĕ. Çавна май ответлă ведомство ертӳçи Муркаш муниципалитет округĕнче профилактика кунĕсене çĕнетме сĕнчĕ.

Йĕркене пăсассине асăрхаттарассин ведомствăсем хушшинчи комисси ларăвне округ пуçлăхĕ Алексей Матросов ертсе пычĕ. Кун йĕркинче пăхса тухма палăртнă пĕрремĕш ыйту кăçалхи сакăр уйăхри преступноç шайне тишкерессипе тата граждансене хирĕç тунă йывăр, уйрăмах йывăр преступноçа асăрхаттарасси пирки пулчĕ.

Михаил Мясников калана тăрăх, округра çак тапхăрта уйрăмах йывăр преступленисем 12 регистрациленĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен преступлени самай ӳсни курăнать, ун чухне 3 пулнă. Йывăр преступленисене – 32 регистрациленĕ, 2 çыннăн кун-çулĕ татăлнă, иртнĕ çул преступленире çын вилни пулман. Йывăр преступленисем Москакасси, Катькас, Ярапайкасси, Чуманкасси, Турай, Хорнуй территори пайĕсенче пулнă.

Мĕнпур преступлени иртнĕ çулхинчен 22 сахалтарах пулни лăпланса лармалли сăлтав мар. Михаил Мясников асăрхаттару ĕçĕсене туса ирттерни пирки чарăнчĕ. Москакасси территори пайĕн пуçлăхĕ Денис Кириллов преступление асăрхаттарссипе мĕнле ĕçлесе пынине пĕлтерчĕ.

Кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйту ирĕке тухнă çынсемпе ĕçлесси, рецидивлă преступноçа асăрхаттарасси пирки пулчĕ. Михаил Мясников пĕлтернĕ тăрăх, Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕнче административлă надзор учетĕнче 35 çын тăрать, формаллă учетра 30 çын. Çак тапхăр тĕлне 11 çын тĕлĕшпе административлă надзор çирĕплетнĕ, 10-шĕ – УФСИН пуçарăвĕпе, 1 – шалти ĕçсен пайĕн пуçарăвĕпе. Айăплă çынсен административлă надзорне тăсма Муркаш район судне 6 ĕç тăратнă.

Раççей УФСИНĕн Чăваш Енри Етĕрнери муниципалитетсем хушшинчи филиалĕн ертӳçин тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Никита Маноль пĕлтернĕ тăрăх, айăплă çынсене ятарлă ĕçе явăçтарассине туллин пурнăçланă. Айăплă тăвату çынна шырава тăратнă, вăл шутран виççĕшне шыраса тупнă. Асăннă филиал тата шалти ĕçсен пайĕпе пĕрле «Условник» оперативлă профилактика мероприятийĕн виçĕ тапхăрне ирттернĕ. Çак ĕç шайĕнче айăплисене сотрудниксем вĕсем пурăннă вырăнта тĕрĕсленĕ, эрехсăра ваккăн сутакан вырăнсене çитнĕ, вăл шутра – каçхи тата çĕрлехи вăхăтсенче те. Айăплисене вырăна çитсе тĕрĕслессине оперативлă мероприяти вăхăтĕнче кăна мар, ытти чухне те пурнăçласа пыраççĕ.

Профилактика канашĕн ĕçĕпе право йĕркине пăсассине асăрхаттарассин ведомствăсем хушшинчи комисси секретарĕ Алина Колесникова чарăнчĕ. Кăçалхи сакăр уйăхра профилактика тĕлĕшпе 58 лару ирттернĕ, унта эрех виçесĕр ĕçекенсене, ирĕке тухнă çынсене, килте харкашу кăларакансене, ăнăçсăр çемьесене тата ыттисене чĕннĕ, вĕсен йĕркесĕр ĕçĕсене сӳтсе явнă.

Вырăнсенче эрех сутакан çынсем патне участковăйсемпе пĕрле çитнĕ, эрех сутнă фактпа тĕл пулман. Ăнăçсăр çемьесене тĕрĕслессипе 101 рейд тунă, 71 çемьене çитсе курнă. Çавăн пекех ларура протокол йышăнăвĕсене пурнăçланине тишкерчĕç, тухса калаçакансем татах та пулчĕç.

Ларăва Муркаш район прокурорĕн пулăшуçи Елена Закамская хутшăнчĕ. Вăл шкулсенче ачасем Интернет уçлăхне пĕр чăрмавсăр кĕрсе тĕрлĕ, вăл шутра хăрушă, ачасене кирлĕ мар информаципе усă курассине чикĕлеме сĕнчĕ. Прокуратура шкулсенче тĕрĕслев ирттернĕ май ку енĕпе çителĕксĕр ĕçлекен шкулсене асăнчĕ.

Округ пуçлăхĕ Алексей Матросов ларăва пĕтĕмлетсе профилактика ĕçне вăйлатма, учетра тăракан çынсемпе ытларах ĕçлеме сĕнчĕ.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Росгварди пĕлтерет

# Уголовлă ответлăхран хăтараççĕ

***Хĕç-пăшалăн, сирпĕнекен хутăшсен, боеприпассен саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене асăрхаттарас тĕллевпе Росгварди çынсенчен регистрацилемен хĕç-пăшала йышăнассипе те ĕçлет.***

***Çыннăн çак япаласем саккунсăр упранаççĕ пулсан, вĕсене хăй ирĕкĕпе парасси пирки вырăнти шалти ĕçсен пайне е Росгварди уйрăмне пĕлтермелле. Хĕç-пăшалтан çапла майпа хăтăлни саккуна пăсманни пулать тата пулма пултаракан йывăр преступлениren те асăрхаттарать.***

***Кăçал пирĕн республикăра çынсем 20 единица хĕç-пăшал тата 500 ытла тĕрлĕ боеприпас хăй ирĕкĕпе панă. Вĕсене çакăншăн пурĕ 100 пин ытла тенкĕ тӳленĕ. Хăй ирĕкĕпе хĕç-пăшал паракансене уголовлă ответлăхран хăтараççĕ.***

**Росгвардин Чăваш Енри управленийĕ.**

Сентябрĕн 27-мĕшĕ – Воспитатель кунĕ

# Савăнăçлăн паллă турĕç



Çак кунсенче воспитательсем тата шкулченхи вĕренĕвĕн ĕçченĕсем хăйсен професси уявне паллă турĕç. Муниципалитет округĕнче уяв мероприятийĕ районти Культура çуртĕнче иртрĕ.

Уява пухăннисене тата асăннă отрасль ветеранĕсене округ пуçлăхĕ Алексей Матросов ячĕпе округ администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Андрей Мясников саламларĕ, пархатарлă ĕçшĕн тав сăмахĕ каларĕ, çирĕп сывлăх, телей, çемьесенче тăнăçлăх сунчĕ. Çавăн пекех Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн председателĕ Александр Иванов, округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова, вĕренӳ ĕçченĕсен профсоюз организацийĕн председателĕ Людмила Федорова та воспитательсене, шкулчченхи вĕренӳ ĕçченĕсене уявпа саламласа малашне те çирĕп сывлăх, ăнăçу сунчĕç.

Ĕçре палăрнисене уявра округ администрацийĕн, вĕренӳ пайĕн, депутатсен округ Пухăвĕн, «Единая Россия» партин Хисеп грамотисемпе тата Тав çырăвĕсемпе чысларĕç, республика, Пĕтĕм Раççей тата халăхсем хушшинчи конкурссенче палăрнă воспитательсене саламларĕç. «Золушка» ача сачĕн заведующийĕ Нелли Иванова вара Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ.

«Сердца трех» эстрада ушкăнĕн артисчĕсем тата «Фантазия» хореографи ушкăнĕ илемлĕ юрăсемпе тата ташăсемпе савăнтарчĕç. Ачасем вара хăйсен воспитателĕсене сăвă йĕркисем халалларĕç.

**Лидия ПАВЛОВА.**
**Надежда СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Оринин халăх театрĕ йĕркеленнĕренпе – 105 çул

# «Зала сăнама тăрăшатăп»

Алексей Воробьев – Оринин халăх театрне ытти çамрăксенчен маларах çӳреме пуçланисенчен пĕри. Халăх умне вăл тĕрлĕ рольпе 2017 çултанпа тухма тытăннă.

2011 çулта Алексей Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вырăнти хуçалăхра инженерта вăй хума тытăннă. Ĕçлекен çын кулленех ял-йыш куçĕ умĕнче пулнă паллах. Оринин клубĕн директорĕнче вăй хуракан Венера Васильева та çак çамрăка асăрханă. Çав вăхăтра шăпах çĕнĕ спектакль кăларма шутланă, анчах артистсем çитмен. Алексее халăх театрне выляма чĕннĕ. Килтисемпе канашланă хыççăн, çемйинче ку шухăша нихăшĕ те алă çупсах йышăнман пулсан та, каччă хăйне ку енĕпе те тĕрĕслесе пăхма шутлать, театра каять. Çапла сцена çинчи хăйĕн пĕрремĕш рольне калăплама тытăнать.

П. Осиповăн «Икĕ каччăн пĕр шухăш» пьеси тăрăх лартнă спектакльте вăл Петĕр рольне вылять. «Пуян каччă, усалтарах характерлă каччă, хăйне мăнаçлă тытать», – аса илчĕ Алексей. Унăн характерĕпе пачах та пĕр пек мар роль тесе хаклать ăна Алексей. Çавăнпах ĕнтĕ спектакле курнисем кайран çамрăк артиста: «Эсĕ кун пек кăшкăрашма та пĕлетĕн-и?» – тесе калани пĕрре мар пулнă. Апла Алексей чи малтанах хăйне лайăх пĕлекенсене тĕлĕнтерме пултарнă пулсан, сцена шăпах ăна кĕтнĕ темелле.

Оринин шкулĕнче вĕреннĕскер, Алексей ачаранпах спортпа туслă пулнă, культура, филологи енĕпе палăрма тӳр килмен ăна.

«Яланах спортра пулнă эпĕ, кунта вара урăхла, пачах та урăх ен – хăв уçăлатăн, çак енĕпе хам мĕн пултарнине кăтартса пама май пур», – калаçăва тăсрĕ çамрăк артист.

Тепĕр сезонта вара, пилĕк çул каялла театрăн 100 çулхи юбилейне уявлама хатĕрленнĕ май, Алексей сцена çине попа пулăшаканă, дьякона вылять.

«Питĕ кăсăклă роль, интереслĕ роль пулчĕ, камитлĕ сăнар. Çынсем çав сыпăка кăтартакансене палламан: грим, костюмсем пире самаях пытарчĕç. Костюмсене хамăрах тунăччĕ, театр режиссерĕ Аркадий Андреев гримпа та ĕçлерĕ ун чухне. Çапла Литва чикки патĕнчи хупахри сценăна кăтартрăмăр. Мана çав сценăра выляма чăнах та килĕшрĕ», – палăртрĕ Алексей.

Алексей çак сценăсăр пуçне тепĕр пилĕк спектакльте вылянă, кашни сезонта – пĕршер çĕнĕ роль. Ытларахăшĕ тĕп рольсен шутĕнче пулнă, вĕсене кашниех май пур таран лайăх кăларма тăрăшнă Алексей.

«Ман шутпа, роле лайăххах кăларас тесен, çав роле кĕмелле, самантлăха унăн пурнăçĕпе пурăнмалла. Сăмахсем вĕренни-



пе кăна ĕç тухмасть, çапла кăна туни тĕрĕс те мар. Сăнар хăйне мĕнле тыткаланине, пит-куçне вылятнине, сассине – пĕтĕмпех шута илмелле. Эпир профессионалсем мар, профессионалсем хăйсен рольне, сăмахран, карчăка е полици сотрудникне, маларах чылай сăнаççĕ. Эпир вара рольсене хамăр мĕн пултарнипе, пĕлнипе, курнипе тата режиссер кăтартса, вĕрентсе пынипе кăларатпăр», – тет çамрăк артист.

Алексей пултарулăхĕпе вара ку таранччен пирĕн тăрăхри çынсене кăна мар, ыттисене те тыткăнлама пултарнă. Ăна çамрăксен театрне выляма та пĕрре мар йыхравлани çакнах çирĕплетет пулĕ, анчах инженер сценăна пушă вăхăта усăллă ирттермелли май тесе палăртать.

Ку таранччен Алексей ытларах çамрăксен ролĕсене калăпланă, «Хĕрсене çапла вăрлаççĕ» спектакльте 40 çулсенчи çынна тата хупахри сценăра кăна ватă çын ролĕсен пулнă.

Алексей çемьеллĕ, мăшăрĕпе икĕ ача ӳстереççĕ, апла пулин те вăл репетицисене тата спектакльсемпе тухса çӳреме май тупать. Хăйĕн аслă хĕр ачине те, Лерăна, пĕрре çапла репетицине илсе кайнă вăл. Кичем ан пултăр тесе хĕр ача пĕрле яланах тетрадь-кăранташ илнĕ, анчах та вĕсем ашшĕн репетицийĕсене курма çӳренĕ хĕр ачана часах унта кирлĕ мар пулса тухнă. Лера та ашшĕ пекех сцена çине тухнă. Ăна валли те «Турă пӳрмен юрату» спектакльте роль пулнă. Массовкăри пĕчĕк хĕр ача – шăпах Лера Воробьева. Амăшĕ çакна ырланă кăна.

Театр Алексей пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнать. «Интереслĕ, каяс килет, хутшăнас килет унта. Пирĕн коллектив та лайăх, эпир питĕ туслă пурăнатпăр, сцена çинче кăна мар, пурнăçра та», – тет вăл.

Оринин халăх артисчĕсен пултарулăхĕ ӳссе пынинче вара Алексей режиссерăн тӳпи пысăккине палăртать. Çынна хăйĕн патне туртма пултарать, хавхалантарма пĕлет, тет. Костюмсем хатĕрлессипе те Аркадий Андреев режиссер тата Венера Васильева чылай тăрăшнине калать Алексей.

«Юратсан юрлас килет» камитри Арçук рольне калăплама интереслĕччĕ. Вăл спектаклпе эпир Ижевск хулинче те пулнăччĕ. Атăл çи тăрăхĕнчи регионсен халăх театрĕсен конкурсĕнче «Главная мужская роль второго плана» номинацире тĕп парне çĕнсе илме пултартăм. Хĕрлĕ Чутайра республикăри «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурсра тĕп рольпе пĕрремĕш вырăн пулнăччĕ», – аса илчĕ артист.

«Хĕрсене çапла вăрлаççĕ» камитре вăл Руслан рольне калăпланă. Камитлĕ роль. «Килĕшнĕччĕ вăл роль мана. Камитре хăв мĕнле вылянине тӳрех сăнама пулать. Зала сăнама тăрăшатăп, тӳрех анализ тăватăп. Çынсем кулаççĕ-и, кулмаççĕ-и, пăхатăп. Зал мана çухатса ямасть», – тет.

Апла пултаруллă, ăсталăх шайĕ Алексейăн пĕчĕкех мар теме пулать.

Ĕмĕтĕнче вара çамрăк артистăн макăртмалла роле калăпласси те пур, ун пек роль хальлĕхе пулман-ха унăн. Çынна хăйĕн сăмахĕпе витерме пултарнине тĕрĕслес кăмăлĕ пур. Кулаççĕ пулсан, макăртĕ те...

Алексей спектакльсен вăхăтĕнче пулса иртнĕ интереслĕ самантсене те аса илчĕ. Пĕрне, хăйпе пулса тухнине, каласа кăтартма та килĕшрĕ.

«Эпĕ хам хуткупăспа вылямастăп. «Юратсан юрлас килет» спектакльте манăн икĕ хут хуткупăспа сцена çине тухмаллаччĕ. Пĕрремĕш тухсан, кĕриччен, сисетĕп, хуткупăса туртрăм та, ман унта темĕн татăлса кайрĕ. Сцена хыçĕнче виçĕ минут пур-ха, юсатăп, тесе шутларăм. Çав виçĕ минутра темĕн юсанă пекки турăм. Майлаштартăм, çынсем малтанхи кăлтăка асăрхаманччĕ-ха. Каллех тухмалла. Тухрăм та, çынсем манран кулса вилеççĕ, хамăрăн артистсем те кулаççĕ. Пăхрăм та, кнопкисем хам енче иккен, кнопкăсем вырнаçнă вырăна пытаркаласа вылярăм вара сцена çинче», – кулса каласа пачĕ Алексей.

Темĕнле кулмалли самант пулса тухсан та, роле вылямалла, çухалса каймалла мар. Спектакле чарса лартма çук-çке. Орининсем кирек мĕнле лару-тăруран та тухма пултарни Алексей тĕслĕхĕнче те курăнчĕ. Пултаруллă çамрăк артистсем «ӳссех» пыраççĕ халăх театрĕнче.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр

Хĕвелтен те ăшăрах, ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăра – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Юрий Иосифович СКВОРЦОВА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Юман пек çирĕп сывлăх, тулли телей, иксĕлми вăй-хăват, инçе çул пек вăрăм ĕмĕр, юрату сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра пире ăнланнăшăн, пулăшнăшăн, пиреншĕн тăрăшнăшăн тав тăватпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе пĕрле тата нумай çул савăнса пурăнмалла пултăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Эсĕ пире питĕ кирлĕ. Турă малашне те сана упратăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, юратнă мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕ, мăнукĕ, сывăх тăванĕсем.**

Чи сывăх та юратнă çыннăмăра – Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Светлана Зосимовна ДАНИЛОВĂНА** илемлĕ юбилей ячĕпе хĕрӳллĕн те ăшшăн саламласа çепĕççĕн ыталатпăр.



Пурнăçăн анлă та вăрăм çулĕпе малашне те мал ĕмĕтлĕн хавхаланса утăмлама çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хăват, тулли телей сунатпăр. Санăн чун илемĕпе кăмăл пуянлăхĕ, ăшпиллĕх, çын хушшинчи хисеп яланхиллех иксĕлми пулччăр, мĕн шутлани, палăртни яланах пурнăçа кĕтĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, амăшĕ тата Котельниковсен çемйи.**

**Хисеплĕ çыннăмăрсем – район хаçачĕн редакцийĕнче, типографире тĕрлĕ çулсенче вăй хунă хаклă ĕçтешĕмĕрсем, сумлă ветерансем!**

Çитсе килекен Аслă ăру çыннисен кунĕпе сире чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эпир лайăх пĕлетпĕр, пурте эсир шанса панă ĕç вырăнĕнче хăй вăхăтĕнче ырми-канми тăрăшнă, пĕрлехи ӳсĕмлĕ аталанăва харпăр хăйĕн тӳпине хывнă, хăвăрăн пуян ĕç опытне çамрăксене пама тăрăшнă. Эпир, сирĕн ĕçе малалла тăсакансем, сире уншăн пысăк тав сăмахĕ калатпăр, сирĕнпе мăнаçланатпăр тата мухтанатпăр. Сирĕн хастарлăхпа чăтăмлăх, ĕçченлĕх çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Кусăрсем яланах савăнăçпа ялкăшчăр, малалла та хастаррăн утма вăй-хăват çитсе пытăр. Сывăх çынсен ăшшине тата тимлĕхне, тăван-хурăнташ хисепне курса нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр. Ыррине шанни тата ĕненни пурăнма вăй парса тăтăр сире. Ачăрсем, мăнукăрсем сире ватлăх çулĕсенче яланах савăнăç кăна парнелеччĕр.

**Райхаçат редакцийĕн коллективĕ.**

Эпĕ ĕç ĕмĕрне ял хуçалăх отраслĕнче тăрăшса ирттертĕм. Çулсем кайнăçемĕн çав тапхăра, пĕр вăхăтра ĕçленисене ырăпа аса илетĕп. Мана Çатракасси тăрăхĕнчи ветерансен канашне ертсе пыма шанчĕç.

Эпир, ветерансен канашĕ тата «Свобода» хуçалăх правленийĕ, вырăнти «Свобода» хуçалăх территорийĕнче пурăнакан, хăй вăхăтĕнче çак хуçалăх аталанăвне тӳпе хывнă ветерансене Ватă çынсен кунĕпе саламласа çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телейлĕ те тăнăç пурнăç сунатпăр. Эсир хăвăр ĕçленĕ вăхăтра хуçалăх çирĕп аталантăр тесе нумай вăй хунă. Сире уншăн пысăк тав.

**Саламласа «Свобода» хуçалăх правленийĕ, ветерансен канашĕ ячĕпе А. АНИСИМОВА.**

Октябрĕн 1-мĕшĕнче çĕршывĕпех Ватă çынсен кунне паллă тăваççĕ. Çав ятпа сентябрĕн 28-мĕшĕнче Орининти Культура çуртне ку тăрăхра пурăнакансем йышлăн пухăнчĕç. Ветерансен канашĕн ертӳçи Валерий Вязов, Ватă çынсен кунне халалланă уява уçса, пухăннисене саламларĕ, вăрăм ĕмĕр пурăнма таса сывлăх, ăнăçу сунчĕ. Çавăн пекех вĕсене Оринин территори пайĕн пуçлăхĕ Валентина Пушкова, Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕсем Павел Вязов тата Алексей Степанов, ыттисем те ăшшăн саламларĕç. Унта юбилярсене те чысларĕç. Районти социаллă хӳтлĕх, пенси фончĕн тата сывлăх хуралĕн ĕçченĕсем çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе те йышăнчĕç.

**А. ШАРИКОВ.**

# Семьей выиграли главный приз – мопед!

***ЭКОНОМЬ, ПОКУПАЯ!** 24 сентября магазин «Техника» г. Ядрина провел 33-й розыгрыш призов среди своих покупателей.*



В жаркую солнечную погоду розыгрыш собрал более 300 человек, которые приехали из Марий Эл, Нижегородской области, городов Чебоксары и Новочебоксарск, Красночетайского, Моргаушского и Ядринского муниципальных округов.

Музыкальный подарок – зажигательный концерт живой музыки с участием постоянного ведущего Михаила Чернова и ансамбля «Эдельвейс» (руководитель Виктор Александров) добавил участникам хорошего настроения.

В розыгрыше участвовали покупатели, приобретшие товар на сумму от 15 тысяч рублей с 9 июля по 24 сентября 2023 года, а также те, кто активировал старые билеты, купив товар на сумму от 15 тысяч рублей или пригласив друзей или родственников за покупкой. Традиционно, призы разыгрывались только среди присутствующих. Дети вытаскивали заветные выигрышные билеты из мешочка, который держал в руках директор магазина Олег Жуков. Если человека не было на розыгрыше, приз переходил к следующему участнику, поэтому у присутствующих было больше шансов выиграть.

Магазином «Техника» было разыграно много ценных и нужных в хозяйстве бытовых приборов, инструментов и техники. Кроме этого, предоставил приз и многолетний партнер магазина: «Радио Родных Дорог».

Счет розыгрышам открыла Екатерина Лебедева из деревни Большой Югуть Ядринского округа, получившая электрический чайник. Евгения Зотова из села Тяптяево Ядринского округа также стала обладателем нового электрочайника.

Утюги выиграли Александр Николаев из деревни Сормово Красночетайского округа и Екатерина Комиссарова из деревни Тукасы Ядринского округа.

Владельцами шуруповертов стали Сергей Мерезкин из поселка Ямоз и Василий Иванов из деревни Изамбаево Ядринского округа.

Сварочные аппараты в качестве приза вручили Сергею Карамышеву из села Чернуха Лысковского округа и Роману Хатвердиеву из поселка Воротынец, а современные пылесосы – Ирине Гусаровой из Ядрина и Татьяне Жижайкиной из деревни Атмени Красночетайского округа.

Нужные в хозяйстве бензопилы выиграли Александр Мидаков из деревни Черепаново Красночетайского округа и Николай Самаков из деревни Тойшево Моргаушского округа.

Приз радиоприемник от партнера «Радио Родных Дорог» вручили Олегу Бундину из села Балдаево Ядринского округа.

Хотя и говорят, что снаряд дважды в одну точку не попадает, зато в розыгрыше призов от магазина «Техника», благодаря детским рукам, удалось дважды осчастливить одного и того же участника – СВЧ-печь досталась Сергею Карамышеву из села Чернуха Лысковского округа.

Также обладательницей СВЧ-печи стала Анна Шагалова из села Михайловское Воротынского округа, а термопота – Елена Карпова из деревни Турбинка Спасского округа. Электрическая мясорубка выпала Александру Зотову из Новочебоксарска.

Один из главных призов, телевизор в 32 дюйма, достался Андрею Белову из деревни Тоганаши Красночетайского округа.

Другой приз – холодильник выиграл Михаил Лаптев из деревни Токшики Моргаушского округа.

Главный приз – мопед на этот раз уехал в деревню Изамбаево Ядринского округа к Наталии Фандеевой, которая приехала с мужем Геннадием Крыловым.

Следующий 34-й розыгрыш призов среди покупателей магазина «Техника» пройдет в 2 этапа: первый состоится 26 ноября – главный приз телевизор 50 дюймов, второй – 14 января 2024 года – главный приз снегоуборщик!

В розыгрыше будут участвовать билеты, приобретенные с 25 сентября по 14 января 2024 года.

Активировать старые билеты могут все покупатели магазина «Техника», купив товар на сумму от 15 тысяч рублей или пригласив друзей или родственников за покупкой. Традиционно за каждые 15 тысяч рублей покупателям предлагается 1 бесплатный билет. В новогоднем розыгрыше будет разыграно много нужных в быту и хозяйстве товаров.

Подробности по адресу: **г. Ядрин, ул. 50 лет Октября, д. 71-д.**

**Телефоны: 8-800-234-78-08 (звонок бесплатный); 8(83547) 22-7-22; 8-905-346-78-08.**

Бесплатная доставка товара в Воротынский, Красночетайский, Ядринский округа и в радиусе 50 км.

**Александр ДАНИЛОВ.**




***Сергей КАРАМЫШЕВ, село Чернуха Лысковского округа:***

– Много раз был наслышан о том, что магазин «Техника» проводит розыгрыш призов среди своих покупателей. Вот впервые решился приехать в Ядрин.

В Лысковском округе у меня имеется дом с приусадебным участком. Друзья уговорили поехать в магазин «Техника», чтобы приобрести необходимые товары. Не думал, что смогу выиграть сразу два приза: сварочный аппарат и микроволновку.

Оказывается, в жизни бывают чудеса, только надо самим проявлять инициативу и обязательно участвовать в розыгрышах призов от магазина «Техника».



***Наталия ФАНДЕЕВА, д. Изамбаево:***

– Мы с мужем Геннадием Крыловым в магазине «Техника» приобретали мотоблок, прицепную тележку, навесное оборудование и несколько раз участвовали в розыгрыше призов. Геннадий Никифорович сейчас на пенсии, а сама работаю в Ядринском КЦСОН по уходу за престарелыми гражданами. Сейчас установилась хорошая погода, поэтому в связи с огородными делами сначала не хотела приезжать в Ядрин, но потом передумала и решила, как говорится, в очередной раз попытать свое счастье.

Очень рады тому, что удалось выиграть мопед. Большое спасибо директору магазина «Техника» Олегу Жукову за такой нужный для нас приз!

**Сывлăх**

# Пепкене пулăшмалла

Амăшĕ кăкăр ĕмĕртнĕ вăхăтра ачан апат ирĕлтерекен органĕсем йĕркеллех ĕçлеççĕ. Хушма апат çитерме тытăнсан вара вăл вар-хырăм ыратнипе тертленме пуçлать. Укроп шывĕпе кишĕр сĕткенĕ пур чухне те пулăшаймаççĕ.

Кăкăр ачисенчен чылайăшĕ кунне 2 – 4 хут пысăккипе тула каять. Çапах хушăран пепке вар хытнипе аптăрать. Хырăмлăх сĕткене, нимĕре, пăтта ирĕлтерме хăнăхса кăна пырать-ха, çавăнпа ача тула йĕркеллĕ каяймасть. Ăна пулăшмалла, унсăрăн организмран вăхăтра кăларман апат каяшĕ тачка пырша пухăнать, организма каялла сăрхăнса кĕме пуçлать, ăна наркăмăшлать.

Ача тула каяйманнипе чылай вăхăт аптăрасан кутанана супăнĕн çемçе касăкне е газ кăларакан трубка чикмелле, е клизма лартмалла. Анчах çакна йăлана кĕртмелле мар, ăна пула ачан тула тухмалли рефлекс тĕрĕс мар аталанма пултарать.

Тĕпренчĕкĕрĕн тăтăш вар хытма тытăнсан тухтăрпа канашлăр. Сывлăх енчен пурте йĕркеллех пулсан ачана пăнчă массажĕпе пулăшмалла.

Ачан алă пӳрнисене пĕрле тытмалла, шĕвĕр пӳрне кăкĕнчен пуçласа кача пӳрнин кăкĕ таран миçе сантиметр пулнине виçмелле. Çак тăршшĕне ВЕ (виçе единици) тесе палăртмалла. Вăл пулăшнипе биологи тĕлĕшĕнчен хастар пăнчăсене палăртмалла.

Пĕрремĕш икĕ пăнчă. Ача кăвапинчен сулахай тата сылтăм еннелле ВЕ виçсе хумалла, кашни енчен çуршар сантиметр хушмалла.

Иккĕмĕш икĕ пăнчă. Сулахай тата сылтăм алă лапписен тулашĕнче алă туни хутланнă тĕлтен чавса енне ВЕ виçсе хумалла.

Виççĕмĕш икĕ пăнчă. Сулахай тата сылтăм урасен шал енчи пакăлчак шăммисенчен çӳлелле ВЕ виçсе хумалла.

Кашни пăнча кунне 1 хут апатчен 30 минут маларах е апат хыççăн 1 сехетрен шĕвĕр е вăта пӳрнепе сехет йĕппи куçнă май сăтăрса 20-шер çеккунт массаж тумалла. 2 – 3 эрне сиплесен ача тула йĕркеллех кайма тытăнать.

Куллен тĕрлĕ хускану туни те пулăшать. Хăнăхтарусен комплексĕ пирки ача тухтăрĕпе канашламалла.

Пепкене час-часах хырăм çине вырттарăр. Ку пыршăлăх хутланассине, пысăккипе тула каяссине лайăхлатать.

# Ватлăхри пурнăç пахалăхлă пултăр

Çулсем иртеççĕ. Çын хăçан та пулин хăй ватăлнине ăнланса илетех. Кирек кам та ватлăх çулĕсене телейлĕ, сывă тата тулли вăй-халпа кĕтсе илме ĕмĕтленет. Хальлĕхе ĕмĕрĕпех çамрăк пулассин проблемине татса парайман, çавăнпа та тĕрĕс мĕнле ватăлассине, ватăлассине епле майпа вăрахлатасси пирки шухăшласа пăхма тивет. Анчах та çакна тĕрĕссипе мĕнле тумаллине нумайăшĕ пĕлсех каймасть.

Чылăйăшне ватлăх çулĕсем шиклентереççĕ. Анчах та ватлăха мĕнле кĕтсе илессине эпир хамăр суйлама пултаратпăр. Ватлăх пирки чирчĕр мĕнне пĕлменнисен те 30 çултан тытăнса шухăшлама пуçăнас пулать, çулсем кайнă май пулса иртекен улшăнусене хатĕрленме тытăнмалла. Тĕпчесе çирĕплетнĕ тăрăх, апатлану, ыйхă, спорт занятийĕсем тата профилактика мероприятийĕсем тĕлĕшĕнчи уйрăм хăнăхусем пулăшнипе, чирсене хăй вăхăтĕнче сипленипе пурнăçа самай вăрăмлатма тата унăн ватлăх çулĕсенчи пахалăхне лайăхлатма май пур.

Ватлăхпа çыхăннă улшăнусем çыннăн мĕнпур организмне пырса тивеççĕ. Вăл шутра пирĕн мимене те. Паллă нейрофизиолог Наталья Бехтерова хăйĕн пĕтĕм пурнăçне мимене тĕпчессине халалланă. Вăл çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: ватлăх пирĕн ӳт-пӳ мĕнле пулнинчен мар, пирĕн миме мĕнле сыхланса юлнинчен килет.

Мимене çамрăк сыхласа хăварма пулать-и-ха? Н. Бехтерова шухăшĕпе миме çамрăклăхне сыхласа хăварас тесен, савăнма тата пурнăçран тĕлĕнме пĕлмелле. Çын 30 çулта та хăй ватăлнă тесе шухăшлама пултарать. Çак шухăшсене пулах вăл старик пулса тăрать. Позитивлă шухăш-кăмăл хаклăхĕ шăпах ĕнтĕ стрессене çĕнтерме пултарнинче. Эпир мĕн чухлĕ нумайрах пăлханатпăр, кулянатпăр – пирĕн мимене тата нерв системине çавăн чухлĕ япăхрах. Çавăнпа та çынсем пурнăçра савăнма пĕлеççĕ, çывăх çынсемпе хутшăнаççĕ, хăйсем кăмăллакан ĕçе тăваççĕ пулсан, вĕсем нумайрах пурăнаççĕ тата вĕсен пурнăç пахалăхĕ те лайăхрах пулать.

Кунсăр пуçне, миме ан ватăлтăр тесен, тренировкăсем ирттерес пулать: кĕнекесем вуламалла, кроссвордсемпе пуçватмăшсем шутламалла. Ученăйсем çирĕплетнĕ тăрăх, уйрăмах адекватлă вăй-хал активлăхĕ пĕчĕк чухне пирĕн миме ӳсĕм çулĕсене пăхăнма тытăнать. Çуран ытларах уçăлса çӳремелле, васкамасăр чупмалла. Çаксем мышцăсене тонусра тытма кăна мар, çавăн пекех ăс-тăна та уçăмлă тума пулăшаççĕ.

Тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, аслă ӳсĕмри çынсем аптăракан Паркинсон тата Альцгеймер чирĕсен шыçă компоненчĕсем пур. Тĕрĕс мар апатлану вара – шыçăн тĕп çăл куçĕ, апла пулсан васкарах ватăлассин те. Насыщеннăй мар çусем çиме тăрăшас пулать, уйрăмах Омега-3: пулă, тинĕс продукчĕсем тата пахча çимĕç. Вĕсем шыçăсене чакараççĕ.

Кунсăр пуçне тата, нимĕн те кансĕрлемест пулин те, профилактика тĕрĕслевĕсенче хăй вăхăтĕнче пулмалли пирки те манма юрамасть. Çакă сиплеве вăхăтра пуçăнассипе çыхăннă.

Асăннă сĕнӳсене тытса пырсан чылай çул хушши сывă пулма май пур.

**Антонина ТАБАРДАК,
медицина профилактикин врачĕ.**

Сĕнӳ-канаш

# Кишĕр мĕнпе усăллă?

Кишĕр – икĕ çул ӳсекен ӳсен-тăран (сайра-хутра – пĕр çул е нумай çул ӳсекенни). Пĕрремĕш çулне çулçăсен пуххине тата тымар çимĕç йĕркелет, иккĕмĕш çулне – вăрлăх тĕммине тата вăрлăх.

Паянхи калаçу – кишĕрĕн усăллă енĕсем пирки.

**Кишĕрте çаксем пур:**

– каротин, çыннăн организмне лексен вăл А витамина куçать;

– В, Е, РР, К витаминсем, аскорбин кислоти;

– минералсем – кали, фосфор, тимĕр, пăхăр, йод, цинк, хром, никель тата фтор.

Кишĕр вăрринче хăйĕн усăллă енĕпе уйрăмах палăрса тăракан эфир çăвĕ пур.

Медицинăра кишĕрпе гипо- тата авитаминоз чухне усă куракçĕ.

Кишĕр эпителизацие пулăшать, клеткăсем ăшĕнчи окисленессин тата йĕркеленессин процесĕсене активлăлатать, углевод ылмашăвне йĕркене кĕртет.

Вăррипе эмел препарачĕсем тума усă курăçĕ. Сăмахран, спазмăран пулăшакан даукарин тума. Вăл, папаверин пекех, юн тымарĕсене сарать, атеросклероз тата стенокарди чухне усă курăçĕ. Вăррinчен косметика тата ароматерапи валли экстрактсем тата эфир çăвĕ хатĕрлеççĕ.

Чылай вăхăт кишĕр çини куç курассине лайăхлатма пулăшать тесе шутланă. Кишĕрте чăннипех те А витамин пур, куç системине йĕркелĕ аталанма вăл кирлĕ. Апла пулин те, куç курасси япăхнă пулсан, кишĕр çинипе çна лайăхлатма май пуррине çирĕплетмен.

**Кишĕрĕн усăллă 13 енĕ:**

1. Чĕрепе юн тымарĕсен сывлăхĕ.

Холестерин шайĕ пысăкки чĕрепе çыхăннă патологисен тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать. Кишĕр регулярлă çини вара юнри холестерин шайне чакарма тата атеросклероз, инсульт тата инфаркт чирĕсем аталанассине асăрхаттарма пулăшать. Кишĕр калин пуян çăл куçĕ пулса тăрать, юн тымарĕсене сарать, çавăнпа юн çӳрессине тата юн ылмашăвне лайăхлатать, чĕрепе юн тымарĕсен çине лекекен нагрузкăна чакарать. Чĕре лайăх ĕçлессишĕн усăллă пулса тăракан кумарин та кишĕрте пур. Вăл гипертензие чакарать тата чĕре сывлăхне сыхлать.

2. Иммунитета çирĕплетет.

Кишĕр антисептикăлла тата антибактерилле енĕсемпе палăрса тăрать, çавна май организмăн иммун ĕçне лайăхлатать. Кунпа пĕрлех кишĕрте С витамин пур. Вăл вара юнри шурă клеткăсен активлăхне пулăшать, иммунитета пулăшакан пĕлтерĕшлĕ тĕп япаласенчен пĕри пулса тăрать.

3. Апат ирĕлтерекен система ĕçне лайăхлатать.

Кишĕрте, ытти ытларах пахча çимĕçри пекех, клетчатка тата хытă чĕлхĕм чылай. Вĕсем уйрăмах апат ирĕлтерекен система ĕçĕ-хĕлĕшĕн пĕлтерĕшлĕ япаласенчен пĕри пулса тăраççĕ, хырăмлăх сĕткенĕн перистальтика куçăмне тата секрецине пулăшаççĕ. Çакă пĕтĕмĕшле вар хытассинчен сыхлать тата пыршăлăхпа вар-хырăмăн çăмăлах мар чирĕсенчен, вăл шутра колоректаллă ракран та хӳтĕленме пулăшать. Çавăн пекех кишĕрпе шĕвĕрĕлченпе кĕрешме те, уйрăмах ачасенне, усă куракçĕ.

4. Онкологи чирĕсем аталанассин профилактики.

Кишĕрти бета-каротин рак чирĕн хăш-пĕр формисем аталанассин хăрушлăхне чакарма пулăшать. Вăл шутрах ӳпке ракне те. Уйрăм тĕпчевсем кăтартса панă тăрăх, кишĕр пек клетчаткăпа пуян пахча çимĕç çини хулăн пыршă ракĕ аталанма пултарассине 24 процент чакарать. Тепĕр тĕпчев вара çавна çирĕплетет: чĕрĕ кишĕр çиекен хĕрарăмсен сĕт парĕн ракĕ пулма пултарасси кишĕр çимен хĕрарăмсенчен 7 – 8 хут пĕчĕкрех.

5. Сывлăхлă куçсем.

Тĕпчевсем çавна кăтартса параççĕ. Кишĕр чи нумай çиекен çынсен çулсем кайнă май молекулярлă дегенераци, чăх куç чирĕ аталанасси 40 процент таран чакать. Ĕçĕ вара пĕтĕмпех бета-каротинăн сиплĕхлĕ вăйĕнче. Вăл ферментативлă реакцие пула А витамина куçать, куç кураслăх çине лайăх витĕм кӳрет.

6. Сывă шăл тата шăл туни.

Кишĕрти органикăллă пĕрлешӳсем питĕ лайăх минерал антиоксиданчĕсем пулса тăраççĕ. Кишĕр çини шăл тунине хавхалантарать, ытларах сурчăк кăларма хистет. Çакă кариес аталанасси патне илсе çитерекен бактерисемпе, галитозпа тата ытти чирпе кĕрешме пулăшать. Кишĕрпе çавăн пекех натураллă абразив вырăнне те усă курма юрать. Мĕншĕн тесен вăл çинĕ хыççăн шăлсене лайăх тасатма пулăшма пултарать.

7. Юнри сахăр шайне йĕркеллĕ тăвать.

Каротиноидсене пула кишĕр юнри сахăр шайне лайăх йĕркелесе тăрать. Çапла майпа сахăр диабечĕпе аптăракансене тулли те сывă пурнăçпа пурăнма пулăшать.

8. Ӳт-тир сывлăхĕ.

Кишĕр тасатассин хăватлă енĕсемпе палăрса тăрать. Çакă вĕт шатра чирĕсене, ӳт-тир чир-чĕрне сиплессипе пысăк эффективлă. Кунсăр пуçне кишĕр ӳт тикĕс пĕр пек тĕслĕ пулман чухне те усăллă. Мĕншĕн тесен вăл ӳте тĕссĕрлентерет. А витамин ытти усăллă япаласемпе пĕрле ӳте эффективлă апатлантарать тата нӳрĕлĕх кӳрет.

9. Сурансене тӳрлетет.

Кишĕр питĕ лайăх антисептик енĕсемпе палăрса тăрать. Çавăнпа сурансене, çавăн пекех касна вырăнсене тӳрлетме унпа активлă усă курăççĕ.

10. Предстательнăй пар сывлăхĕ

Простата пысăкланни 30 çул урлă каçнă арçынсем хушшинче час-часах тĕл пулать. Вăл предстательнăй пар пысăкланасси патне илсе çитерет. Кишĕр чир пуласcине асăрхаттарма е чирĕн канăçсăр симптомĕсене чакарма пулăшать. Çакă бета-каротин витĕмĕпе çыхăннă.

11. Диарейăран хăтарать.

Кишĕр яшки диарейăран сипленессипе



чăннипех те питĕ лайăх халăх мелĕ пулса тăрать. Тĕпрен илсен, çакă вăл пыршăлăха лăплантарнипе, бактерисем ĕрчессине вăрахлатнипе çыхăннă. Кунсăр пуçне вăл пектин илмелли питĕ лайăх мел пулса тăрать. Вăл пыршăлăха карса илсе унăн сисĕмлĕхне чакарать.

12. Организма тасатать.

Кишĕр тата унăн сĕткенĕ ват хăваласcин тата тасатассин эффекчĕпе палăрса тăраççĕ, организмран токсинсене кăларса пĕвере, пӳрене тата ват хăмпине сывлăх кӳреççĕ.

13. Çие юлнă хĕрарăмшăн усăллă.

Кишĕр сĕткенĕ, виселлĕ ĕçсен, çие юлнă хĕрарăмшăн та, çавăн пекех кăкăр ĕмертекен хĕрарăмшăн та çав тери усăллă. Вăл пулăшнипе кăкăр сĕчĕн биологи пахалăхĕсене лайăхлатма май пур. Вăл ăна активлă микроэлементсемпе пуянрах тăвать, вĕсем ачан иммун системине çирĕплетеççĕ.

Кишĕрĕн калорилĕхĕ 35 килокалорипе танлашать. Куратпăр ĕнтĕ, кишĕр вăл самай пысăк мар калориллĕ çимĕç пулса тăрать. Çавăнпа та хăйсен йывăрăшне висерe тытас текенсен те ăна хăйсен рационне кĕртме юрать.

**Кишĕр мĕнле суйламалла?**

Кишĕр суйланă чухне чи малтанах вăл мĕнле пулса çитнине тата унăн пахалăхне пăхас пулать. Унăн тĕсĕ кун пек чухне пĕлтерĕшлех мар.

Палăртнă тăрăх, 150 грамран ытла мар таякан кишĕр чи тутли те чи сĕтекли шутланать. Кунсăр пуçне ăна туса илнĕ чухне нитратсемпе усă курнă пулсан та, тымар çимĕç çак йывăрăша ӳссе çитиччен сиенлĕ япаласене нумаях пухма ĕлкĕреймест.

Кишĕрпе запеканка е салат валли усă куратăр пулсан, çутăрах тĕслĕ тымар çимĕç суйласа илсен лайăхрах. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш блюдо тата сĕткен валли вара ялтăркка çимĕç лайăхрах. Тымар çимĕç сĕтеклĕхне унăн çине чĕрнепе хăйпăтса пăхса пĕлме пулать. Сĕткен нумай пулсан, вăл тӳрех курăнĕ. Типерех кайнă кишĕр çинче кун пек сăнав ирттерме май пулмасть, унăн сĕткенĕ те питĕ сахал пулĕ.

**Роспотребнадзорăн «Çынсен гигиена вĕренĕвĕн центрĕ» федераци бюджет учрежденийĕ.**

# Пите çамрăклатма

3 – 4 апат кашăкĕ сĕлĕ мамăкне (хлопья) вĕри сĕтпе е хăймапа хутăштармалла. Пулнă массăна пит çине хумалла. 15 – 20 минут тытса тăмалла. Кайран ăшă шывпа çумалла. Çак маска çилпе кушăрханă, типшĕм ӳте çемçетме пулăшать.

2 апат кашăкĕ пыла 1 апат кашăкĕ сĕлĕ мамăкĕпе хутăштармалла, 2 чей кашăкĕ сĕт хушмалла. Хутăша пит çине сĕрмелле те 15 – 20 минут тытмалла.

